Аҫапӑҫа Кӗн[...]

№ 14

Кор'кки Максӑмӗ

# ҪӖЛКАҪ

Вырӑсларан ҫӑваш'ла куҫарнӑ

КАЛАВ

ҪАВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ.
Шупашкар 1924.

Ађапăђа Кĕнеки

Б-57

№ 14

Кор'кки Максăмĕ

# ҬĔЛКАШ

(051)

Вырăсларан ђăвашла куҫарнă

## КАЛАВ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРАМĔ.
Шупашкар 1924.

Чувашоблит № 404. Печ. 3.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата

Б-57

# Куçараканран.

## Кор'кки Максăмĕ çинђен пĕрик сăмах.

Кор'кки Максăмĕ (ђăн йађĕ Пешккăв Максăм Елекçейĕ) Ђулхулара 1869 çулта çуралнă. Унăн ашшĕ Перм мешђенĕ пулнă, амăшĕ Ђулхулара пĕвевçĕ ĕçĕпе тăранса пурăнакан çын хĕрĕ пулнă. Ашшĕн йађĕ Пешккăв Саватти Максăмĕ пулнă, амăшĕн йађĕ Каширĕн Васили Варвари пулнă. Кор'кки ашшĕ мађар пулнă, çав ĕçпе вăл тăранса пурăннă. Çавăнпа Кор'кки те хăйне, мађар сынни епĕ, тет. 5 çула çитсен Кор'кки тăлăха йулнă. Ашшĕ-амăшĕ вилнĕ. Вара Кор'ккипе кукашшĕ Каширĕн Васили усрава илнĕ. Вăл пĕђĕк Кор'ккийе Ђассослов тăрăх вулама вĕрентнĕ. 9 çула çитсен кукашшĕ Кор'ккийе атă-

пушмак сутакан макаçăна суту-илў ĕçне вĕренме панă. Анђах кунта Корькки нумайах пурăнман,—тарнă та плансем тăвакан çын патне вырăна кĕнĕ. Кунта та вăл нумайах пурăнса каймасť—турăшсем тăвакан маçтăрскойа кайса кĕрет. Маçтăрскойран праххут çине ĕçлеме кĕрет, унтан сатовнĕк патĕнђе пурăнаť. Çапла вăл вырăнтан вырăна куçса çўресе 15 çула çитет. Çак вăхăтсенђе вăл алла мĕнле кĕнеке çаклаинă, çавна вуланă. 15 çула ăна ăс кĕре пуçланă. Вăл вара вĕренме шут тытнă. Çакăн пирки вăл Хусана кайнă. Анђах ĕлĕк, патша вăхăтĕнђе, çук çынна вĕренме ирĕк пулман, çавăнпа Кор'кки ниçта та кĕреймен. Вĕренес вырăнне клентĕр тăвакан çĕре ĕçлеме кĕмелле пулнă. Кор'кки вара кунта пит нумай нуша курať—темиçе тĕслĕ ĕç те тăваť, крусштăк та, вутă касакан та пулаť. Выçăпа аптăраса пурăнаť. Хусантан вăл, телей шыраса, Тсаритсына куçаť, кун-

та вӑл ҫукун ҫул ҫине хуралҫа кӗрет. Унтан вӑл каллех, салтака каймалла пирки, ҫулхулана таварнаҫ.

Салтака ӑна илмеҫҫӗ.. Каллех Кор‘ккийе сӗтӗрӗнсе ҫӳремелле пулаҫ. Корькки Макҫӑмӗ Раҫҫейе урлӑ та пирлӗ касса ҫӳренӗ. Вӑл таҫта та пулнӑ.

Кор‘кки Макҫӑмӗ писсаттӗл ҫулӗ ҫине 1892-1893 ҫулсенҫе тухнӑ. Ҫи малтан вӑл Макар Ҫутра йатлӑ калав ҫырнӑ. Унтан вӑл Ҫӗлкаш тейекен калава ҫаптарнӑ. Ҫакӑнтан вара Кор‘кки пысӑк йапаласемех ҫырса ҫаптарма тытӑннӑ. Корькки ҫырнисене ҫамрӑксем пит хавас йышӑннӑ. Кор‘кки хӑйӗн кӗнекисене ҫаптарса ӗлкӗреймен вӗсем пур те саланнӑ. Кор‘кки ҫырнисем ҫав тӗрлӗ паха пулнӑ.

Кор‘кки Макҫӑмӗ хӑйӗн кӗнекисем ҫинҫе килҫуртсӑр, хуларан хулана, вырӑнтан вырӑна ирӗклӗ вӗҫен кайӑк пек ҫӳрекенсем ҫинҫен, „ылтӑн роттӑри“ сынсем ҫинҫен, тӗн-

ҫе касса ҫӳрекен сынсем ҫинҫен, тата ытти ҫакăн пек „поҫҫаксем“ ҫинҫен сыраť. Хăйĕн сырнисенҫе вăл ҫак сынсене, ытти писсаттĕлсем пек, сын шутĕнҫен кăларман, вĕсене ахаљ сынсенҫен нумай мала хунă. Кор‘кки керойĕсем пуринҫен ытла ирĕке йуратаҫҫĕ. Вĕсем ирĕкшĕн пурăнаҫҫĕ.

Кор‘кки Макҫăмĕ шкулта вĕренмен сын. Ҫапах та унăн йаҫĕ пĕтĕм тĕнҫере йанăраť.

Хаљхи писсаттĕлсем хушшинҫе Кор‘кки ҫи малти вырăнта тăраť. Ун пек лайăх, тĕрĕс, илемлĕ ҫыракан пит сахал. Кор‘кки кĕнекисене йут патшалăх ҫĕлхисене те куҫарнă, Совет Сойусĕнҫи халăхсен ҫĕлхисене те нумайăшне куҫарнă.

Кор‘кки Макҫăмĕ Ленинпе те сывăх тăпă. Вĕсем Револ̌утси пулиҫҫен те, пулсан та ҫас ҫасах курса пĕрпĕринпе калаҫнă. Пĕр пĕрне сырусем сырнă.

Кор‘кки Макҫăмĕ, Октапĕр Револ̌утсийĕ тухсан, ĕҫлекенсемпе хрес-

ҫенсен йенне пулнӑ, урӑхла пулма та пултарайман.

Кор'кки Макҫӑмӗ ҫӑваш ӗҫхалӑхне те сывӑх ҫын. Вӑл ҫырнисем ҫӑваш ҫӗрине кӗрсех лараҫҫӗ, мӗншӗн тесен, Кор'кки ҫырнисем патша вӑхӑтӗнҫе ҫуклӑхпа йалтан хулана ӗҫ шырама кайнӑ ҫӑвашсене те тиевҫҫӗ. Сахали вара ӗлӗк ҫӑваш ҫыннисем пысӑк хуласенҫе (Хусанта, Ҫӗмпӗрте, Харккӑвра) Кор'кки Макҫӑмӗ ҫырнӑ пек пурӑннӑскерсем? Ҫавӑнпа Кор'кки Макҫӑмӗ пирӗншӗн тӑван писсаттӗл. Епӗр ӑна, хамӑрӑн, теме пултаратпӑр.

Ҫӑваш Кӗнеки Уйрӑмӗ ҫакна астуса Кор'кки кӗнекисене вырӑсларан ҫӑвашла куҫарас ӗҫе пуҫларӗ. Ҫи малтан Ҫӗлкаша куҫармалла пулҫӗ.

Ҫӑваш ӗҫҫыннине епӗр Кор'кки ҫырнӑ кӗнекесене пурне те вулама сунатпӑр.

Лашман.

Шупашкар хули.
1924—15/VI.

# Ҫӗлкаш.

Каваҥран ҫӗкленнӗ тусанпа тӗттӗмленнӗ кӑнкӑвак кӑнтӑр пӗлӗҫӗ пӑтранҫӑк тӑрат; вӗри хӗвел тинӗс ҫине кӗл тӗслӗ тусан витӗр пӑхат. Вӑл шыв ҫине ӳкеймест: шыв ҫийӗ урлӑ та пирлӗ кимӗ кӳсменӗсемпе ҫурӑлат, праххут урапнсемпе касӑлат; вӗҫлӗ кӑкӑрлӑ тӗрӗк киммисем, тата урӑх паруслӑ кимӗсем тӑвӑр каваҥра унта та кунта та ишсе ҫӳреҫҫӗ. Каваҥра, ҫул ҫумне кӑкарнӑ тинӗсӗн ирӗклӗ хумӗсем, хӑйсем ҫинҫе мӑн, йӑвӑр кимӗсем ишнипе, карапсем, паршӑсем ҫумне, ҫырансем хӗррине ҫапӑна ҫапӑна кӑпӑкланнипе, тӗрлӗ ҫӳпҫапӑпа пӑтранса, вӗресе тӑраҫҫӗ,

Йакӑр сӑнҫӑрӗсем йанӑрани, тӗрлӗ йӑвӑр йапаласем турттаракан вагонсем пӗр пӗрин ҫумне пырса ҫа-

пăнни, тимĕр листисем ҫул ҫине таҫтан кĕмсĕртетсе ахăрса анни, йăвăҫ ӳкни, исвоспҫăксен урап̆исем шăлтăртатни, праххут шăхăрнисем, пĕрре хăлхана ҫурмалла хытă, тепĕре хулăн сасăпа мĕкĕрекенсем, круспҫăксен кăшкăрашăвĕ, матроссен, тамăшҫăри салтаксен сассисем, пур те, тăнапуҫа хуплакан мусăк пулса, пăтранса, хумханса, кавăҫ ҫинҫе тăраҫҫĕ. Вĕсен ҫумне ҫĕр ҫинҫен тата ҫĕнĕрен ҫĕнĕ хумсем, мăн сасăлисем, ҫиленекен саслисем, йĕри-таврана ҫĕтретсе, вĕри, тусанлă сывлăша ҫурса ҫӳлелле хăпараҫҫĕ.

Кранит, тимĕр, йăвăҫ, кавăҫăн ҫул сарнă лаптăкĕ, карапсемпе ҫынсем, пурте—урса, иртĕнсе кайса, хăрушă сасăсем кăларса тăраҫҫĕ. Ҫын сассисем, кăҫт кăна илтĕнекенсем, ҫакăнта вара пит кулăшла. Хайсем, ҫыннисем те кулăшла та шеллемелле: вĕсен кĕлеткисем—тусанлăскерсем, ҫĕтĕкҫатăкскерсем, шăши пек ҫупса, йăзăр тăвăрсем ҫĕклесе кук

ленсе çӳрекенскерсем, унта та, кунта тусан кӑлараççӗ. Кавӑҥри тимӗр куписемпе тавар куписем çумӗнҫе кӗмсӗртететекен вакунсем çумӗнҫе кавӑҥри çынсем ытла та пӗҫӗккӗ курӑнаççӗ.

Мӑн праххутсем шӑхӑртаççӗ, унтан папплатса тарӑн сывласа илеçҫӗ те çӗнӗрен шӑхӑртаççӗ. Вӗсем хӑйсен ӑшне таварсем çӗклекен тусанлӑ çынсенҫен, кулнӑ пек тӑраççӗ. Ҫӑнахах ик-виç кӗренкке çӑкӑр, ӗçлесе тупас пирки пинпер пӑт хулпуççи çинҫе праххутсен ӑшне тавар йӑтакан крусшҫӑксен кӗлеткисем куççул тухаҫҫен кулӑшла пулнӑ.

Кавӑҥри сасӑсем хӑлхана çурнӑ. Тусан, сӑмса шӑтӑкӗсене кӗрсе сӑмсана хуплансӑ. Вӗри хӗвел ӳте хӗртнӗ. Çанçурӑма ывӑнтарнӑ. Йӗритаврара пур йапала та çитӗнсе çитнӗ пек, акӑ, акӑ, ипӗлсе анса тар пек харӑс хыпса çунса пӗтес пек туйӑннӑ. Вара çакӑн хыççӑн уçӑ сывлӑш тухас пек, çӗр çинҫе шӑлт лӑпкӑ

пулас пек туйăннă. Тусанлă сасăсем, ахăракан, çиленекен сасăсем, хуллен уртаракан сасăсем пĕтмелле пек туйăннă; хулара та, тинĕс çинҫе те, пĕлĕт çинҫе те лăпкă, таса, лайăх пулмалла пек туйăннă.

Акă вуникĕ хут йанăраса ҫан çапрĕ. Йулашки пăхăр сасă хытса кайсан, тискер сасăсем хуллентерех шавлакан пулҫĕç. Тепĕр минутран вĕсем мăкăртатса пĕтсех ларҫĕç. Халĕ етем сассипе тинĕс хумханни те илтĕне пуçларĕ. Кăнтăрла апаҫĕ çиме вăхăт çитрĕ.

---

I.

Крусшҫăксем ĕçлеме пăрахса, усламçăсенҫен çимеллисем илсе, ушкăнăн ушкăнăн çавăнтах, çĕр çине, сулхăна шавласа ларнă вăхăтра, вĕсен хушшинҫе Ҫĕкаш Кришкки курăнҫĕ—тĕнҫе курнă вата капкăр, каваҥ сыннисен пĕлĕшĕ, вĕсем—Ҫĕлкаш пйантсă, ним хăраман вăрă иккенне пит лайăх пĕлнĕ. Вăл ça-

рауран, çарапуç пулнă, çиййӗнҫе кивӗ плис шалаварпа (йӗмпе) çитсă кӗпе пулнă. Кӗпе çурăкӗсенҫен хура ӳтпе витӗннӗ кӗтеслӗ шăмăсем курăнса тăнă. Хура, шуралма пуçланă, çӳçӗсем тăратса тăнипе, тата вӗçлӗ, авăнҫăк сăмсалă пиҫӗ шыçăнса кайнипе, вăл халӗ кăна çыврăса тăни паларнă. Унăн вăрăм майăхӗ çинҫе ыраш улăм пӗрҫи çакăнса тăнă, тепӗр йенҫе тепӗри çакăнса тăнă. Вăрăм, типшăмлă, пăртак курпунтарахскер, ҫул çинҫе утса пырса, вăл хăйӗн авăнҫăк сăмсине унта та кунта та пăркаласа, караппăл пек, куçӗсене йăлтăртатарса, крусшҫăксем çине пăхнă. Унăн майăхӗсем, аçакушак майăхӗсем пек, йаланах тăратса тăнă, çурăм хыçне хунă аллисем пӗр пӗрне сăтăркаланă, алă пӳрнисене вăл темӗншӗн шартлаттарнă. Çарауран çӳрекен крушҫăксем хушшинҫе, Ҫӗлкаш хăйӗн караппăллăхӗпе, ырханлăхӗпе, утнипе, таçтан паларса тăнă.

Карçинккă куписем çинҫе ларакан крусштҫăксем патне çитсен, ăна хирĕç пĕр сарлака хулпуççилĕ çын тăҫĕ. Вăл тăҫĕ те Ҫĕлкашпа çумăн утрĕ. Хăй çапла калат:

— Салтаксем икĕ çыхă манухвактура шыраççĕ... Илтрĕни, Кришкăи?

— Ну? тет Ҫăлкаш пĕр хăрамасăр ун çине пăхса.

— Мĕн тата-ну? Шыраççĕ, тетĕп. Урăх ним те çук.

— Мáна вара, çухалнине шырама, ҫĕнмерĕç пулĕ?

Ҫĕлкаш шăлĕсéне йĕрсе пристăнҫсем йенне пăхрĕ те:

— Шуйтан патне кай! терĕ.

Йулташĕ ним ҫĕнмесĕр кайалла кайрĕ.

— Ей, ҫарăнха! Мишкана курмарăни кунта?

— Такçантанпах курман ĕнтĕ!— тет лешĕ йулташĕсем патне утса.

Ҫĕлкаш малалла кайрĕ. Ăна, пур те лайăх пĕлĕше пĕлнĕ пек, хирĕç тăрса илеççĕ. Вăл, йаланах уçă кă-

мăллăскер, пайан темĕскер çиленнĕ, татса кăшкăрса калаçаť. Таçтан тавар куписем хыçĕнђен тамăшнă хуралçи тухрĕ. Вăл Ђĕлкаш çулĕ çине тухрĕ те, çапăçма хатĕрленнĕ пек, сулахай аллипе хĕçне тытса, сылтăм аллипе Ђĕлкаша тытса ђарђĕ.

— Ђарăн! Ăçта кайатăн? терĕ хуралçă.

Ђĕлкаш пĕр утăм кайалла ђакрĕ те хуралçă çине пăхса кулђĕ.

Тамăшђă хуралçи хăйĕн ђейе хĕрлĕ питне çиленсе хăратмалла тăвасшăн пулнă, анђах тем ђухлĕ хăтлансан та вăл хăй питне хăратмалла тăвайман; куçĕсене ђарса пăрахса, куç харшисене мăкăљтатıарса вăл кулăшла анђах пулайнă.

— Калана сана—кавăђа ан çӳре, тесе, айакпĕрђисене хуçăп! Есĕ каллех килнĕ, тесе кăшкăрнă хуралçă. Кăна хирĕç аллине тăсса:

— Сывăи, Çеменăђ! Епĕ сана курманни нумай пулаť ĕнтĕ, терĕ Ђĕлкаш.

— Кай, кай!.. Ӗмӗрте сана курмасан та шел мар.

Анҫах ҫапах Ҫеменӑҫ тӑснӑ аллине илсе хӑй те алӑ паҫӗ.

— Акӑ мӗн, Мишкана есӗ курмани? тет Ҫӗлкаш хуралҫӑ аллине, хӑйӗн ҫывӑх йулташӗн аллине ҫӑмӑртанӑ пек, ҫӑмӑртаса.

— Мӗнле Мишкана? Нимӗнле Мишкана та пӗлместӗп. Кай кунтан, атту паккаус наҫҫалнӗкӗ курсан, парӗ сана...

— Хӗрлӗ ҫӳҫлине. Пӗркун епӗ унпа „Кострома“ йатлӑ праххут ҫинҫе ӗҫленӗҫҫӗ, тет Ҫӗлкаш.

— Ҫавӑнпа пӗрле вӑрлатӑп, тесе кала!.. Полӈнитсана ӑна илсе кайрӗҫ. Урине хуҫнӑ, ҫукун ӳкнӗ... Кай, шӑллӑм, аван каласнӑ ҫухне, атту ӗнсӳренех ӑсатӑп!..

— А, есӗ ҫапла иккен! Хӑй Мишкана пӗлместӗп, тет. Хӑй тата пӗлет иккен... Есӗ, Ҫеменӑҫ, мӗншӗн капла ҫиленнӗха?..

— Акӑ мӗн, Кришка: есӗ манпа шӑл йӗртсе ан тӑр. Кай кунтан!

Хуралçă çиленме пуçларĕ. Вăл йĕри тавра пăхкаласа хăйĕн аллине Ђĕлкаш аллисенђен кăларасшăн пулнă. Ђĕлкаш çăра куç харшисем айĕнђен ун çине пăхса, мăйăхĕсем айĕнђен кулса, унăн аллине йамасăр калаçса тăнă.

— Есĕ ан васкатха мана. Епĕ санпа тăраниђђен калаçамха, унтан кайăп вара. Каласа пар мана, мĕнле пурăнатăн? . арăму, ађусем-сывăи? Унтан Ђĕлкаш куçĕсене йăлтăртаттарса, шăлĕсене йĕртсе каласа хуђĕ:—Сан патна хăнана пыма хатĕрленетĕп, анђах вахăт çук—ĕçетĕп акă...

— Ну, ну... есĕ пăрах ăна. Есĕ ан кул, шăмăлă шуйтан! Епĕ, шăллăм, ђăн ђăнах... Елле есĕ çуртсем тăрăх, йе урам тăрăх çаратса çӳреме хатĕрленетĕни?

— Мĕншĕн апла? Кавăђра та пире хамăр ĕмĕре пурлăх çитмеллеха. Тупата туршăн çитмелле, Çеменăђ! Есĕ, каллех, икĕ сыхă манухвакту-

рӑ пӗтӗрсе ҫикнӗ, теҫҫӗ. Асту, Ҫеменӑҫ, пӑхкала! Мӗнле те пулсан ан ҫаклан!..

Ҫапла каланине илтсен Ҫеменӑҫ ҫиленнипе ҫӗтреме пуҫланӑ. Вӑл темӗскер каласшӑн пулнӑ, анҫах нимӗскер те калайман, пӗр сурҫӑкӗсене анҫах сирпӗтнӗ. Вара Ҫӗлкаш хуралҫӑ аллине йарса кавӑҥ хапхи йеннелле хӑйӗн вӑрӑм урисемпе танклаттарса кайнӑ. Хуралҫӑ Ҫӗлкаш хыҫҫӑн вӑрҫса пынӑ.

Хыҫалтан:

— Пӑхха, Кришкӑ, мӗнле сана пуҫлӑхсем сыхлаҫҫӗ, тесе крусшҫӑксем хушшинҫен пӗри кӑшкӑрнӑ; крусшҫӑксем апат ҫинӗ хыҫҫӑн пӗҫҫисене тӑратса выртнӑ.

—Епӗ ҫарауран, ҫавӑнпа Ҫеменӑҫ, ман урана шӑрпӑк ан тӑрӑнтӑр тесе сыхласа пырат мана, тет кӑна хирӗҫ Ҫӗлкаш.

Хапха патне ҫитсен, икӗ салтак Ҫӗлкаша хыпаласа пӑхрӗҫ те урамалла тӗртсе кӑларҫӗҫ.

— Ан йарӑр есӗр ӑна кавӑҥа, тесе кӑшкӑрҭӗ кавӑҥ, карташӗнҭе йулнӑ Ҫеменӑҭ.

Ҭӗлкаш ҫул урлӑ каҫрӗ те хупах патне пырса тумпӑ ҫине ларҭӗ.

Кавӑҥ хапхинҭен тийеннӗ лавсем кӗмсӗртетсе тухнӑ. Вӗсене хирӗҫ, ҭул ҫинҭе шалтӑртатса, пушӑ лавсем кӗнӗ. Кавӑҥ ҫинҭе хура пӗлӗт пек тусан тӑнӑ.

Ҫак урнӑ кавӑҥра, Ҫеменӑҭпа вӑрҫнӑ хыҫҫӑн, Ҭӗлкашӑн кӑмӑлӗ пит уҫӑ тӑнӑ. Малта вӑл ӗҫлесе пысӑк укҫа тупассине курнӑ. Ҫак укҫана тупма тар йухтарса ӗҫлемелле пулман... Ҭӗлкаш куҫӗсене хӗссе ыран мӗнле кулҭаӗ тӑвасси ҫинҭен шутланӑ, вӑл ыран кӑсйинҭе хут укҫасем шӑтӑртатни ҫинҭен шухӑшланӑ... Унтан вӑл хӑйӗн йулташне Мишкана та аса илнӗ. Хӑйне хӑй Мишка ун ӗҫӗнҭе пулайман пирки вӑрҫса та илнӗ. Пӗҭҭен тӑвайманши ку ӗҫе? Ҫанталӑк мӗнлеши?.. Вӑл пӗ-

лĕт çине те, урам тăрăх та тинкĕрсе пăхнă.

Ђĕлкашран пĕр ултă утăмра, траттуар ђулĕ синђе, тумпă çуменђе, килте тĕртнĕ кĕпейĕмпе тумланнă, çăпата сырнă, хĕвелпе тĕсĕ кайнă картус тăхăннă çамрăк кађђă ларнă. Уп çумĕнђе пĕђĕкеççĕ катумкапа авăрсăр çава выртнă, çавине утăпа ђĕркенĕ, çийелтен кантăрапа çыхнă. Кађђă, сарлака хулпуççилĕскер, тĕреклĕскер, сарăскер, хевелпе те, çилпе те пиçнĕ сын, пысăк кăнкăвак куçĕсемпе Ђĕлкаш йеннелле пăхса тăнă.

Сасартак Ђĕлкаш çăварне карса йађĕ те, шăлĕсене кăтартса, ђĕлхине тăсса, куçĕсене тавăрса кађђă çине пăхрĕ.

Кађђă, нимĕскер тума пĕлмесĕр, малтан куçĕсене хупса уçрĕ, унтан хытă сасăпа, ха-ха-ха, ей ђутакçке, тесе кулса йађĕ. Кађђă çавăнтах хăй йапалисене илсе Ђĕлкаш тумпи çумне куçса ларђĕ.

— Мĕн, тăванăм, пăртак ĕçнĕ пулмалла, терĕ Ҫĕлкаша каҫҫă.

— Пулнăҫҫĕ çав çавăн пек ĕç, пулнăҫҫĕ, терĕ кулкаласа Ҫĕлкаш. Пысăк куçлă каҫҫă пăхсанах кăмăла кайнă. Çулнă çĕртени?

— Çавăнтан. Пĕр çухрăм çултăмăр—пĕр пус илтĕмĕр. Ĕçсем наҫар. Халăх нумай! Выçă халăх тулнă... Хака ўкерҫĕç. Купаҥ шывĕ тăрăх утмăл пус параҭҫĕç. Ĕлĕк виç тенкĕ, тăваттă, пилĕк тенкĕ панă тенине илтнĕ!

— Ĕлĕк, тетĕн. Ĕлĕк унта вырăса курнăшăн кăна виç тенкĕ панă. Епĕ пĕр вунă çул ĕнтĕ çав ремеслапа кăна пурăннă. Пыраттăм йала—епĕ вырăс, теттĕм. Çавăнтах сана хыпалама, курма тытăнаççĕ—çавăнтах виç тенкĕ параççĕ. Унтан ĕçтереççĕ, çитереççĕ. Пурăн вара мĕн ҫухлĕ пурăнас тетĕн!..

Каҫҫă Ҫĕлкаша итлесе, çăварне карса, тĕлĕнсех кайнă, унтан çак çын улталанине сиссе ахăлтатса кулса йанă. Ҫĕлкаш ним те кулман.

Ђутак, ђăн пулнă пек каласаť, епĕ ĕненсе ларăтăп...

Ђăн ђăнах унта, акă тупата туршăн...

— Епĕ мĕн çинђен вара? Епĕ те ĕлĕкхи çинђен калаçатăпçке...

— Кай, мĕн калаçатăн, тесе кађђă аллине сулђĕ.—Кам есĕ, атă çĕлекени, йе çĕвĕçи?

— Епĕи! терĕ Ђĕлкаш. Пăртак шухăшласан,—пулăçă епĕ, терĕ.

— Пулăçă! Акă кам иккен есĕ. Пулă тытатăн пулаť?

— Мĕнле пулă? Кунта пулăçсем пулă кăна тытмаççĕ. Шыва кайнă çынсене, кивĕ йакăрсене, путнă кимĕсене—пурне те тытаççĕ, кăлараççĕ...

—Ултала, ултала! .. Есĕ çак йышши пулăç пулмалла, вĕсем хăйсем çинђен çапла йурлаççĕ:

Епĕр хамăр сĕрекесене
Çыран çинђе туртатпăр,
Кĕлетсене, ђăлансене кĕретпĕр!..

— Есĕ вара ун пеккисене курнăи? терĕ Ђĕлкаш кађђă çине пăх-

са. Ҫӗлкаш ҫак каҫҫӑ пӑртак ухмахрах пулнине витӗр курса тӑнӑ.

—Ҫук, курман. Ӑҫта вӗсене курас? Илтнӗ анҫах...

— Авани?

— Вӗсеме? Аванҫке. Пит ирӗке йуратаҫҫӗ, ирӗклӗ ҫынсем вӗсем.

— Мӗн вара сана... ирӗк? Йурататӑни вара ирӗке?

— Мӗнле вара урӑхла? Хӑвна ху хуҫа, ӑҫта кайас тетӗн, ҫавӑнта кайатӑн, мӗн тӑвас тетӗн, ҫавна тӑватӑн.

Хӑвна ху тытма пӗлсессӗн, ӗнсӳ ҫинҫе ҫулсем пулмасан, пит лайӑх ӗҫ. Ҫӳре, ӑҫта ҫӳрес тетӗн, турӑ йатне кӑна мухта...

Ҫӗлкаш ҫакна илтсен каҫҫӑран ҫаврӑнҫӗ те, сурҫӗ. Унтан калаҫма та ҫарӑнҫӗ.

— Акӑ ман ӗҫ те... Сасартӑк каҫҫӑ калаҫма пуҫларӗ.—Атте вилҫӗ, суртйӗр пӗҫӗккӗ, анне карҫӑк, ҫӗр наҫар, мӗн тумалла манӑн? Пурӑнмалла. Мӗнле? Темӗскерле. Ла-

йăх çурта кайса киле кĕмелле пулђĕ. Йурĕ. Хĕрне уйăрсан лайăхђĕ! Çук, шуйтан хуни хĕрне уйăрмасҭ. Мĕн вара, епĕ уншăн ĕçлетĕпи?... Акă мĕнле ĕçсем! Ех, пĕр çĕр аллă тенкĕ ĕçлесе тупасђђĕ, ура çине тăрăттăм, вара Ентипе кăтартăттăм! Мархвуна уйăртăни? Çук. Кирлĕ мар. Йалта, турра шĕкĕр, пĕр хĕр кăна мар. Вара епĕ çапла пĕтĕмпе ирĕке тухăттăм... Халĕ ним тума та çук, каллех киле таврăнас пулаҭ. Шухăшланăђђĕ епĕ çакăнта килсе пĕр икĕ çĕр тенкĕ укçа çапăп, тесе. Çук, тухмарĕ... Киле таврăнсан та ıарçă пек ĕçлени анђах пулаҭ ĕнтĕ. Вара хам вађђи çуртйăр пулмасҭ те... Ех-хе-хе!.. Кађђă киле таврăнасшăн пулман. Вăл пуçне усса хуйхăрса ларнă.

Ђĕлкаш, калаçас килмест пулсан та унран тата ыйтрĕ:

— Халĕ ăçта кайас тетĕн есĕ?

— Ăçта кайас? Ху пĕлетĕн,—килелле..

— Ну, кăна епĕ пелместĕп, шет есĕ Тĕрĕк çĕрне кайатăн?

— Тĕ-рĕк çĕр-не!... тăсса каларĕ каҫҫă.—Кам вара ҫăн тĕнпе пурăнакан унта кайаť? Каларăнçке!...

— Ухмахçке, есĕ! терĕ те Ҫĕлкаш çаврăнса ларҫĕ. Ҫĕлкаш каҫҫă пĕр вĕçĕмсĕр калаçнипе кĕçĕр тăвас ĕç çинҫен лайăхах шухăшлайман, çавăнпа вăл каҫҫă çине çиленме пуçланă. Каҫҫă хăйне хăй сăмса айĕнҫе мăкăртатса ларнă, вăхăҫĕпе вăл Ҫĕлкаш çине сиввĕн пăхнă. Унăн пиҫĕкуçĕ сарăлса кайнă, куçĕсем хĕсĕнсе пĕрре уçăлнă, пĕрре хупăннă. Вăл Ҫĕлкаша, ухмах, тенĕшĕн çилленнĕ.

Çĕтĕкçатăк тумтирлĕ çын каҫҫă çине нимĕскер те пăхман. Вăл тумпă çинҫе шăхăркаласа ларнă.

— Ей, пулăçă! ҫасҫас есĕ ўсĕр пулатăни çапла, теме тытăннă каҫҫă, анҫах çак вăхăтра Ҫĕлкаш ун йенне çаврăннă та çапла каланă:

— Итле, аҫа! Пайан çĕрле манпа пĕр ĕç тăватăни?

— Кала ҫасрах!

— Мӗн тумалла? тесе ыйтнӑ каҫҫӑ.

— Мӗн тата!.. Мӗн ӗҫлеттерӗп... Пулӑ тытма... Кимӗпе ишӗн...

— Ҫапла... Мӗн вара? Йурӗ. Ӗҫлеме йурать. Анҫах есӗ кутӑн, тӗттӗм ҫын...

Ҫакна илтсен Ҫӗлкаш кӑкӑрне хӗртнӗ тимӗр пӗҫернӗ пек туйӑннӑ. Шӑл витӗр сӗрсе вӑл каланӑ:

— Есӗ кирлӗ мара, ху пӗлменнине, ан калаҫ. Акӑ епӗ пуҫӑнтан ҫапӑп та пуҫу салансах кайӗ...

Вӑл тумпӑ ҫинҫен сиксе анҫӗ те сулахай аллипе сылтӑм мӑйӑхне тытрӗ, унтан сылтӑм аллине ҫӑмӑртарӗ те куҫӗсене ҫиҫӗм пек йӑлтӑртаттарса йаҫӗ.

Каҫҫӑ хӑрарӗ. Йӗритавра пӑхрӗ те, вӑл та ура ҫине тӑҫӗ.

— Ну?—тесе ҫиленсе ыйтрӗ Ҫӗлкаш.

Вӑл ҫак ҫамрӑк пӑру ӑна, кутӑн, тӗттӗм ҫын, тесе каланӑшӑн ҫӗклен-

се кайнӑ; унӑн ӑшӗ хуранри шыв пек вӗренӗ. Каҫҫӑпа калаҫнӑ ҫухне вӑл ӑна ҫын шутне те хуман, халӗ вӑл ӑна таса куҫӗсемшӗн те, хӗвелпе писнӗ пиҫӗкуҫӗшӗн те, таҫта унӑн тӑван йал пурришӗн те, унӑн пӗтӗм пурнӑҫӗшӗн, иртнӗ пурнӑҫӗшӗн, пулассишӗн, пуринҫен ытла ҫак аҫана ирӗклӗхе, унӑн хакне пӗлмесӗр ӑна йуратнӑшӑн, пуриншӗн те вӑл ӑна курайми пулнӑ. Йаланах, хӑвӑнтан наҫар, йе айалта тӑракан ҫын есӗ йуратнинех, йе есӗ курайманнинех—йуратаť, йе кураймасť пулсан, ҫакӑн пирки вӗсем сан тӗслӗ пулсан, ҫавӑн пек ҫынсене курас килмест.

Каҫҫӑ Ҫӗлкаш ҫине пӑхнӑ та Ҫӗлкаш халӗ ҫӑн хуҫа пекех тӑнӑ.

— Епӗ вӗт...—калаҫма тытӑнҫӗ каҫҫӑ, кайалла тумастӑп... Епӗ пит хавас. Ӗҫ шыратӑп вӗт епӗ. Мана —сан патӑнтаи, йе урӑх ҫын патӗнҫеи ӗҫлени пурӗ пӗрех. Епӗ, сана, ҫавна, санӑн ӗҫсынни сӑнӗ ҫук пир-

ки, кӑна каларӑмҫке... Анҭах, пӗлетӗп вӗт епӗ, кашни ҫынах сан пек пулма пултарайӑ... Ей, турӑ, вара епӗ пйантсӑсене курмани? Нумай курнӑ. Сантан лайӑххисене те курнӑ...

— Ну йурӗ, йурӗ!.. Есӗ хирӗҫ мари?—тесе ҫемҫерех ыйтрӗ Ҭӗлкаш.

— Епӗи? Айа!.. Савӑнсах пыратӑп! Кала хакна.

— Хакӗ ӗҫ тӑрӑх. Мӗн ҭухлӗ пулӑ тытӑпӑр... Пилӗк тенкӗ те илме пултаратӑн. Илтрӗни?

Халӗ ӗҫ укҫа ҫинҭен пынӑ, ҫавӑнпа каҭҭӑ, хресҭен сыннискер, малтанах мӗн ҭухлӗ илессине пӗлесшӗн пулнӑ, вӑл ҫавӑнпа Ҭӗлкашран тӗрӗс хак кӗтнӗ. Каҭҭӑ ҫӗнӗрен Ҭӗлкаша шанми пулнӑ.

— Ку йапала мана кирлӗ мар, тӑванӑм! Есӗ мана тӑрна вырӑнне кӑсийене пар...

— Ан калаҫ, ҭарӑнха! Айа трактире!

Вара вӗсем урам тӑрӑх йунашар утнӑ. Ҭӗлкаш мӑйӑхӗсене пӗтӗрсе

хуҫа йеврĕрлĕ утса пынă, каҫҫă пуҫне тайса утнă, вăл Ҫĕлкаша шансах пĕтереймен.

— Йату санăн мĕнле?—терĕ Ҫĕлкаш.

— Каврила, терĕ хирĕҫ каҫҫă.

Унтан вĕсем тĕттĕм трактире пырса кĕреҫҫĕ.

Ҫĕлкаш пухвет патне пырат̆ те йалан трактире ҫӳрекен ҫын сассине пĕр путтылккă ерех, йашка, ăшалапă аш, ҫей пама хушат̆. Укҫине кайран памалла, терĕ Ҫĕлкаш. Пухветра тăракан ҫын пуҫне кăна тайрĕ. Пухветри ҫын Ҫĕлкаша шаннăран, Каврила та Ҫĕлкаша лайăх ҫын тесе шутлама пуҫланă.

— Ну халĕ епĕр пăртак ҫийĕпĕр те, тĕплĕрех калаҫăпăр. Есĕ лархa, епĕ пĕр ҫĕре кайса килем.

Ҫĕлкаш тухрĕ. Каврила хăй тавра пăхкалама пуҫларĕ. Трактир потвалта пулнă: йĕпе, тĕттĕм пулнă, тата унта ерех, тапак, смала шăршисем пулнă. Каврилана хирĕҫ, тепĕр

сĕтел хушшинҫе, кăмрăк тусанĕпе, смалапа вараланнă матрос тумтирлĕ хĕрлĕ сухаллă ӳсĕр ҫын ларнă. Вăл, ик! ик! туса темскерле йурă йурланă. Ун хыҫĕнҫе хура ҫӳҫлĕ ҫĕтĕкҫатăкпа тумланнă ӳсĕр мăлтаван арăмĕсем кĕрлесе ларнă. Унтан хыҫалта тĕттĕмре тата ӳсĕр ҫынсем курăннă. Вĕсем пур те ала сулсах тем те пĕр йурланă...

Каврилана пĕҫҫен хăрушă пулнă. Вăл хăй хуҫине кĕте пуҫланă. Трактир мăн выҫăх пек ҫавах ахăрса тăнă. Трактирте ҫĕр тĕслĕ сасă илтĕннĕ, ҫав сасăсем ҫул потвалтан тулалла тухасшăн пулнă, анҫах тухайман. Каврила хăй ӳтне темскер йĕпе сывлăш ҫавăрса илнине сиснĕ. Унăн пуҫĕ ҫаврăнма пуҫланă, куҫĕсене тĕтĕре карнă...

Ҫĕлкаш килҫĕ. Вара вĕсем калаҫакалаҫа ĕҫсе-ҫиме тытăнҫĕҫ. Каврила виҫĕ ҫеркеренех ӳсĕрĕлҫĕ. Вăл хăйĕн хуҫине, есĕ маттур ҫын, темесшĕн пулнă, анҫах ҫĕлхи ҫаврăнайман пирки ним те калайман.

Ђăлкаш ун çине пăхнă та кулса каланă:

— Ех, ђуста, виç ђерке ĕçрĕ те усĕрĕлђĕ, мĕнле капла ĕçлĕн есĕ?

— Тăванăм!.. тенĕ Каврила.—Ан хăра! Епĕ сан кăмăлна тăвăп!.. Кил, ђуптăвам сана!.. Е?..

— Ну, ну!.—Акă тата ĕçсе парха! Каврила ĕçнĕ. Ĕçсен—ĕçсен ун куçĕ умĕнђе пур йапала та çаврăнма пуçланă. Унăн хăсас килнĕ. Пиђĕкуçĕ унăн шĕвелсе кайнă, вăл ухмахланнă, калаçас тесен — калаçайман, му, му, теме кăна пултарнă. Ђĕлкаш мăйăхĕсене пĕтĕрсе Каврила çине кулса пăхса тăнă, унтан вăл çиленсе пăхма пуçланă.

Трактир хăйне ўсĕр сасăсемпе кĕрленĕ. Хĕрлĕ çўçлĕ матрос сĕтел çине пуçне хурса çывăрнă.

— Айаха, кайар!—терĕ Ђĕлкаш тăрса.

Каврила ури çине тăрасшăн пулнă, анђах тăрайман. Вăл намăс сăмахсемпе вăрçма пуçланă, унтан ним пĕлмесĕр кулса йанă.

— Салансах кайнӑ!— терӗ те Ҫӗлкаш Каврила ҫумне ларҫӗ. Каврила хуҫи ҫине выҫӑх куҫӗсемпе пӑхса пӗр ҫарӑнмасӑр кулнӑ. Ҫӗлкаш ун ҫине пӑхса темӗскер шухӑшланӑ. Хӑй умӗнҫе ларакан ҫынна вӑл унталла та, кунталла та ҫавӑрса йама пултарнӑ. Вӑл ҫак ҫампӑкӑн пурнӑҫне выҫамалли карт пек хуҫкалама пултарнӑ, тата тепӗр йенҫен вӑлах ун пурнӑҫне лайӑхлатма та пултарнӑ. Хӑйне хӑй хуҫа вырӑнне хурса Ҫӗлкаш савӑннӑ; ҫав вӑхӑтрах вӑл каҫҫӑн пулас пурнӑҫне те курса тӑнӑ. Вӑл каҫҫӑ пурнӑҫӗнҫен пӗрре кулнӑ, тепӗре хуйхӑрнӑ... Кайрантарах вара Ҫӗлкаш каҫҫа шелленӗ—ашшӗ пек ун ҫине пӑха пуҫланӑ. Каҫҫӑ ӑна кирлӗ пулнӑ. Вара Ҫӗлкаш Каврилана аллисенҫен тытнӑ та хыҫӗнҫен ҫӗркуҫҫисемпе тӗртсе трактир карташне кӑларнӑ. Тулта вӑл Каврилана вутӑ купи сулхӑнне вырттарнӑ та, хӑй ун ҫумне ларса ҫӗлӗмне тивертсе

йанă. Каврила пăртак çаврăнкаланă та çывăрса кайнă.

II.

— Нухатĕри?—тесе ыйтрĕ Ђĕлкаш Кавриларан.

— Халех. Акă кўсменсене лартамха. Шаккама йурати?

— Асту, пĕр сасђĕвĕ те ан пултăр.

Иккĕш те вĕсем кимĕ çинђе ларнă. Вĕсен кимми пысăк парусла кимĕ çумĕнђе тăнă. Инçерех тĕрлĕ йăвăçсемпе тийеннĕ кимĕсем шыв хумханнипе сиккелесе ларнă.

Çĕр тĕттĕм пулнă. Тинĕс çинђе хулăн хура лапсăркка пĕлĕтсем ишнĕ. Тинĕс шывĕ лăпкă тăнă, машшин сĕрекен çу пекех хура выртнă. Тинĕс шывĕ хуллен сывласа тăвар шăрши кăларнă, ађашланса, йанăраса кимĕсемпе çыран çумне пыра-пыра çапăннă. Ђĕлкаш кимми сăпка пек, хуллен кăна сиксе тăнă. Тинĕсре, çыранран пуçласа таçта çитиђђенех, кимĕсен, карапсен, пар-

шăсен мĕлкисем курăнса тăнă; кашнийĕ çинҫех вăрăм маҫҫтăсем çинҫе темиçе тĕслĕ хунарсем курăнса тăнă. Çак çутăсем пурте тинĕс пиҫĕ çине ўксе сапсарă пăнҫăсем пулса тăнă. Çак сарă çутăсем тинĕс çинҫе пит илемлĕ курăннă. Тинĕс, кунĕпе ĕçлесе ывăннă çын пек, пит паттăр çывăрнă.

— Кайатпăр! —терĕ Каврила кўсменĕсене шыва йарса.

— Йурат, терĕ те Ҫĕлкаш кимĕ кĕреçипе киммине таса шыва тĕртсе кăларҫĕ. Кимми йака шыв тăрăх хыçалтан çапçутă йĕр хăварса малалла пысăк кимĕсем хушшине тухса ипсе кайрĕ.

— Ей, пуçу ыратмасти?

— Ҫукун пек йанăрат... Шутсăр ыратат... Шывпа йĕпетемха...

— Пуçна йĕпетиҫҫен — ăшҫикне йĕпет! Ҫĕлкаш Каврилана пĕр путтылккă ерех тыттарҫĕ.

— Ђанахи? Пилле еппин, атте турă!.. Путтылккăран ĕçнĕ сасă илтĕнђĕ.

— Çитĕ, нумай ĕçме йурамаст,— —терĕ Ђĕлкаш.

Кимĕ çĕнĕрен, пĕр сасăсăр, пысăк кимĕсем хушшинђе малалла ишсе кайрĕ. Сасартăк вăл вĕсен хушшинђен тухрĕ те тинĕс вĕçĕхĕрђисĕр, иаттăрскер, çапçутăскер курăнса кайрĕ. Малта тинĕспе пĕлĕт сыпăçнă тĕлте шыв çинђе кăвакхура пĕлĕтсем купаланса тăнă, хĕррисем вĕсен сарă мамăк пек пулнă, хăшĕ тата симĕс тăнă, тинĕс шывĕ тĕслĕ, тата тăхлан тĕслĕ пĕлĕтсем те хăйсенђен хура йăвăр мĕлке ÿкерсе ђунпа пÿçмиммине пусмăрланă. Пĕлĕтсем умлăхысçлă шăппăн малалла ишнĕ...

Çак ђунсăр пĕлĕтсем хуллен шуинђен ђун темĕскер шикленнĕ пек туйăннă.

Тинĕс хĕрринђе вĕсем шутсăр нумай пулнă. Çÿлелле пĕр ђарăнмасăр хăпарнă. Пĕлĕт куçĕсене, темиçе

тĕслĕ çăлтăрсене, вĕсем нихăçан та çухатса тинĕсе ӳкме парас çук пек туйăннă.

— Лайăхи тинĕс?—тесе ыйтнă Ђĕлкаш.

— Йурамалла! Анђах кунта хăрушă,—тенĕ Каврила. Хăй вăл пĕр ђаранмасăр шыва йăлтăртаттарса, кӳсменсемпе касса пынă. Шыв пăр так кăна йанăранă, вăрăм кӳсменĕсем хавасланса малалла вĕçнĕ.

— Мĕншĕн хăрамаллаха?.. Ех, ухмах!—тенĕ Ђĕлкаш.

Вăл ним намăса пĕлмен çын, вăрă пулсан та тинĕсе йуратнă.

Вăл нихăçан та çак тĕттĕм, сарлака, вĕçĕхĕррисĕр, ирĕклĕ, паттăр тинĕсе курса тăранайман. Çавăнпа, тинĕс лайăхи, тенине хирĕç—хăрамалла кунта, тесе каланине илтсен вăл çиленнĕ. Тинĕс илемне курман çын унщăн ухмах пулнă. Ђĕлкаш кимĕ хысĕнђе ларса кимĕ хӳрине тытса шыва кастарса пынă. Çапла вăл тинĕспе тасçта çитиђђенех кайма пултарнă.

Тинӗс çинҫе Ҫӗлкашӑн кӑмӑлӗ çемçелнипе вӑл пурнӑçри нушисене те маннӑ. Вӑл хӑйне хӑй тинӗсре йуратнӑ, уншӑн кунта пурнӑç та çук пек туйӑннӑ.

Çӗрле çывӑрнӑ тинӗс çинҫе ӑшӑ лӑпкӑ сывлӑш вӗçсе çӳресе етем ҫунне кӗрсе çынна лӑплантарать, тӗрлӗ усал шухӑшсене пӗтерсе лайӑх шухӑшсем шухӑшлатарать...

— Хатӗрӳсем ӑçта санӑн?— тесе сасартӑк Каврила ыйтнӑ.

Ҫӗлкаш шартах сикнӗ.

— Хатӗрсеми? Кимӗрехçке.

— Мӗнле? Вӑлтасем тата...

Ҫӗлкаш çак аҫаран хӑй мӗн тӑвассине пытарасшӑн пулман; вӑл тинӗс илемӗпе лӑпланнӑ ҫунне пӑтратнӑшӑн анҫах Каврилана çиленнӗ. Темӗскер кӑкӑрӗпе карланкинҫе каснӑ пек пулнӑ та вӑл кӑшкӑрса каланӑ.

— Акӑ, есӗ вырӑнта ларатӑн, лар, сана никам та тивмест! Çын ӗçне хӑвӑн сӑмсуна ан ҫик. Сана ишме

илнĕ—ху ĕçне тў. Ҫĕлхўпе пакăлтатарма тытăнсан, асту, наҫар пулĕ. Илтрĕни?

Кимĕ пăртак туртăннă та ҫаранна. Кўсменсем шыврах йулса, шыва кăпăклантарнă. Каврила темскер ларкăç çинҫе ларса тапаланнă.

— Иш ҫасрах!..

Намăс сăмахсем сывлăша çурҫĕç. Каврила кўсменĕсене тытрĕ те ҫасах ишме пуçларĕ. Кимĕ малалла пĕрре хытă, тепĕре хуллен шыва кăкăрĕпе çурса кĕрлетерсе пыраҭ.

— Тикĕсрех!

Ҫĕлкаш хăй выранĕнҫен тăнă та кимĕ кĕреçине аллинҫен пăрахмасăр шуралса кайнă Каврила çине шăтарас пек çиленсе пăхаҭ. Каврила ҫĕтрет. Ҫĕлкаш шăлĕсене шăтăртатарса Каврила çине сиксе ларас пек тăраҭ.

— Кам кăшкăраҭ? тенĕ саcă илтĕннĕ.

— У, шуйтан, иш ҫасрах. Хуллентерех... Вĕлерен йăтă!.. Мĕн тата

ђарăнтăн?.. Иш, иш, пĕрре, иккĕ... Асту, кăшкăр кăна... Пуçна çурса пăрахăп... тесе çĕлен пек ђашлатнă Ђĕлкаш.

— Ей, турра çуратнă хĕр... Каврила хăранипе турра кĕлтума пуçланă. Кимĕ хунарсемпе çутатнă кавăњ йеннелле пăрăнђĕ.

— Ей, кам унта кăшкăрат?—тесе çĕнĕрен тинĕсрен сасă илтĕннĕ. Халĕ сасă инçерех пулнă, çавăнпа Ђĕлкашăн ђĕри лăпланнă.

— Есĕ ху кăшкăратăн, тенĕ хуллен кăна Ђĕлкаш кăшкăракана хирĕç. Унтан Каврила йенне çаврăнса:—Ну, телейлĕ çапах есĕ, атту леш шуйтансем хăвалама пуçланă пулсан—есĕ пĕтеттĕн. Пĕлетĕни? Епĕ вара сана... тўрех пулăсем патне йанă пулăттăм!.. Халĕ Ђĕлкаш кулса лăпкăрах калаçнă, анђах Каврила халĕ те хăранă.

— Итлеха, йар мана! Христус турă йађĕпе ыйтатăп, йар! ăçта та пулсан антарха... Ей, йай, йай! Пĕт-

рём пуç, пётрём пуç! Турруна астуса ил те, йарха мана. Мён еп сана? Еçлейместёп епё, çак ёçре!.. Пултараймастăп епё... Ей, турă! Пётетёп ёнтё ахалех!..

Мёнлеха есё мана çак ёçе ҫикрён... Ех! Çылăх пулё сана!.. Ҫуна пётерестён вёт!.. Ех, ёçсем — хăйаматсем!..

— Мёнле ёçсем? — çиленсе ыйтнă Ҫёлкаш. — Е, мёнле ёçсем?.. Ҫёлкаш катҫă хăранинҫен вăрттăн савăнса ларнă.

— Тёттём ёçсем, шăллăм... Йар, турăшăн... Мён еп сана?.. Е?..

— Ҫарăн! Кирлё пулмасан илмен пулăттăм. Ăнлантăни? Ăнлантăн пулсан — ҫарăн!

— Ей, турă! — теçе ёсёклесе йёнё Каврила.

— Çитё, çитё! — тенё Ҫёлкаш.

Каврила ҫăтаймасăр ёсёклесех, сăмсине шăла-шăлах, йёре пуçланă. Йёнипе вăл пёр вырăнта лăпкă ларайман, анҫах кўсменёсемпе паттăр

ишнĕ. Кимми ухă пек вĕçнĕ. Каллех çул çинҫе пысăк кимĕсем, паршăсем тĕл пула пуçланă. Каллех Ҫĕлкаш кимми пысăк кимĕсем хушшинҫе пăркаланса ишме пуçланă.

— Ей, асту! Итле! Кам та пулсан, мĕн те пулсан ыйтсан, пурăнас килет пулсан—нимĕскер те никама та хирĕç ан калаç! Ăнлантăни?

Каврила вăрăммăн сывласа илсе, ех, мăнтарăн турри, пĕтрĕм ĕнтĕ, тесе каллех йĕме тытăннă.

— Ан йĕр! тенĕ çиленсе шăл витĕр, çĕлен пек ҫашлатса, Ҫĕлкаш.

Каврила йĕме ҫарăннă. Хăранипе вăл хытсах кайнă. Вырăнĕнҫе ларса вăл пĕрре кўсменĕсене шыва ҫикнĕ, тепĕре вĕсене кăларнă; вăл хăй мĕн тунине те пĕлмен. Каврила тăм кĕлетке пек çăпати çине пăхса ишнĕ.

Хумсем пĕр ҫарăнмасăр шавланă...

Акă кавăҥ та куç умне тухрĕ. Кавăҥăн ҫул хўми хыçĕнҫе çын сассисем, йурланисем, шыв шавлани, ираххут шăхăртнисем илтĕннĕ.

— Ҫарӑн ишме!—терӗ хуллен Ҫӗлкаш.—Пӑрах кӳсменӳсене! Хӳме тӑрӑх аласемпе тытӑнса пыр.

Хуллен, шуйтан аҫи!..

Каврила ҫулсенҫен тытса киммине хӳме тӑрӑх шутарса пынӑ. Кимми пӗр сасӑсӑр малалла шунӑ.

— Ҫарӑн, парха кӳсменӳсене! Пар кунта! Паспӑрту ӑҫта санӑн? Каттумкараи? Пар еппин каттумкуна! Ну, пар ҫасрах! Ку акӑ мӗншӗн, тарасран... Халӗ ниҫта та тараймӑн. Кӳсменсемсӗр есӗ мӗнле те пулсан тарма пултарӑттӑн, паспӑртсӑр каймӑн. Кӗт мана! Асту, кӑшкӑрсан тусан—тинӗс тӗпӗнҫе те тупӑп!...

Сасартӑк Ҫӗлкаш хӳме ҫине сиксе хӑпарҫӗ те хӳме леш йенне сиксе анҫӗ.

Каврила хӑрасах ӳкрӗ, ҫав тӗрлӗ Ҫӗлкаш сасартӑк куҫран ҫухалҫӗ... Анҫах Каврилан ҫав вӑхӑтрах ҫӗриҫунӗ лӑпланҫӗ, хӑрани тупи таҫта ишӗлсе анҫӗ. Халӗ тарма та йурат ӗнтӗ. Каврила ирӗклӗн сывла-

са илсе унта-кунта çавранса пахрĕ. Сулахай йенђе пысăк, хура, тупăк пек, пăрахăç паршă тăнă. Тинĕс хумĕсем паршă çумне пыра-пыра çапăннă, хумсем хыçĕнђен паршă ăшĕ йанăрана, темĕскер паршă йăвăрăн сывланă пек илтĕннĕ. Сылтăм йенђе çĕлен пек таçта çитиђенех шыв çинђи хумсене ђаракан ђул хўме тăсăлса выртнă. Хыçалта, тĕтрере, хура мĕлкесем куранса тăнă. Малта кимĕпе хўме хушшинђе хуралçа выртнă хура шыв. Тинĕс çинђе хура пĕлĕтсем купаланса тăнă. Çак пысăк, йавăр пĕлĕтсем çынна хупăрласа илес пек хуллен шуса тăнă. Вĕсем шуни шикленмелле пулнă. Пур йапала та хура, сивĕ, усал пек туйăннă. Каврила хăрасах кайнă. Çак пĕђђен хăрани Каврилана ђĕлкашран хăранинђен те хăрушăрах пулнă. Вăл хăранипе кимĕ тĕппнех лăпђăнса ларнă...

Таврара ним сасђĕвĕ те пулман, пĕр тинĕс кăна анаслаеа выртнă.

Пӗлӗтсем, ӗлӗкхи пекех, тинӗс ҫинҫе шуса пынӑ, анҫах вӗсем халӗ тинӗс тӗпӗнҫен нумайран нумай тухса тӑнӑ. Вӗсем ҫине пӑхсан тинӗс ҫинҫе тепӗр тинӗс хумханнӑ пек курӑннӑ. Пӗлӗтсем тӗлӗ-тӗлӗпе пысӑк хумсем пек курӑннӑ, тӗлӗпе тарӑн шӑтӑк пек курӑннӑ. Вырӑнӗпе пӗлӗт хӗррисем кӑпӑкланнӑ тинӗс шывӗ пек хумханса тӑнӑ.

Каврила ҫак хӑрушӑ тӗттӗмпе хупласах ларнӑ. Вӑл пӗҫҫен ларса хӑранипе, ҫасрах хуҫа килтӗрҫҫӗ, тейе пуҫланӑ. Килмесен, мӗн тӑвасха?.. Вӑхӑт пит хуллен пынӑ, пӗлӗтсенҫен те хуллентерех шунӑ. Сасҫӗвӗ ҫукки Каврилана хӑратнӑран хӑратсах пынӑ... Сасартӑк хӳме леш йенҫе шыв шапӑртатни илтӗнҫӗ, вӑртӑн калаҫнӑ пек те туйӑнҫӗ. Каврила хӑранипе вилес патнех ҫитрӗ...

— Мӗн, сывӑратӑни елле? Тыт!.. Асту!.. тенӗ сасӑ. Хӳме ҫинҫе тӑваткӗтеслӗ йӑвӑр сыхӑ курӑнҫӗ. Кав-

рила ӑна кимӗ ҫине илсе хуҫӗ. Унтан тата тепӗр ҫыхӑ илсе хуҫӗ. Унтан хӳме ҫинҫе Ҫӗлкаш мӗлки курӑнҫӗ, кӳсменсем курӑнҫӗҫ, Каврила ури патне каттумка пӗрсе ӳкрӗ те Ҫӗлкаш кимӗ хӳри ҫине пырса ларҫӗ.

Каврила Ҫӗлкаш ҫине савӑнса пӑхса илҫӗ.

— Ывӑнтӑни? тӗрӗ вӑл.

— Йурӗ, йурӗ... Аҭа, ишха ҫасрах! Пӗтӗм вӑйпа иш... Ну, ҫур ӗҫӗ пулҫӗ. Халӗ шуйтан кусӗсем ҫумӗнҫен кӑна иртсе каймалла, вара ӗҫне пӗтеретӗн. Укҫуна ил те Машку патне вӗҫтер Машка тавраш пури санӑн? Ей, аҫа?

— Ҫ—ҫуккӑ!

Каврила пӗтӗм вӑйӗпе тӑрӑшса ишнӗ, кӑкӑрӗ унӑн вӗркӗҫ пек, аллисем хурҫӑ прушинсем пек ӗҫленӗ. Кимӗ айӗнҫе шывӗ шавласа тӑнӑ, кимӗ хыҫӗнҫе халӗ сарлака йӗр ҫуталса пынӑ. Каврилан пӗтӗм ҫанҫурӑмӗ тарланӑ, анҫах вӑл ҫапах та

пĕтĕм вăйĕпе ишнĕ. Çак каçра икĕ хут хăраса, виççĕмĕш хут хăрас мар тесе вăл тăрăшса ишнĕ. Кавриламĕнле те пулсан сыран çине тухса çак усал сынтан хăй ĕçне туса пĕтерсе тараситăн пулнă. Вăл хăйне хăй, унпа пĕр сăмах та калаçмăп, вăл мĕн хушнине пурне те тăвăп, тесе сăмах панă, ҫасрах çĕр çине тухасҫҫĕ, тесе шухăшласа пынă. Вара ыран Микулай Укотнĕке молепĕн тутараттăм, тесе пынă. Вăл ним калаçмасăр, паровос пек ҫапкаса, вăхăҫĕпе Ҫĕлкаш çине çамка айĕнҫен пăхса ишсе пынă.

Лешĕ—хыткан, вăрăмскер, малалла пĕшкĕнсе ларса вĕçсе кайма хатĕрленнĕ вĕçенкайăк йевĕрлех ларнă. Вăл пĕр аллинҫе кимĕ кĕреçине тытса, тепĕр аллипе хăйĕн сылтăм вăрăм мăйăхне пĕтĕрсе, малалла, хурҫăка пек пăхса пынă. Вăхăҫĕпе кулкаланă. Ҫĕлкаш пайанхи ĕçшĕн ытла та савăннă. Тата Каврила тăрăшса ишни те ун кăмăлне

кайнӑ. Вӑл Каврила ӗҫленине лайӑххрах пӑхнӑ та ӑна шелleме пуҫланӑ. Ҫавӑнпа вӑл ӑна ырӑ сӑмаххсем каласшӑн пулнӑ.

— Ей, аҙа, хытӑ хӑрарӑни? тенӗ вӑл кулса.

— Ҫукҫке!.. тенӗ хирӗҫ сурҙӑкӗсене ҫӑтса Каврила.

— Халӗ ӗнтӗ хуллентерех ишсен те пыраҭ. Тата пӗр вырӑнтан кӑна иртмелле... Канха пӑртак...—Каврила пӗр вӑхӑт ҙарӑнса питне куҫне кӗпе ҫаннипе шӑлнӑ та каллех кӳсменӗсене шыва ҙикнӗ.

— Хуллентерех иш. Шыв ан каласҫтӑр... Пӗр хапхаран тухмалла халӗ. Хуллен, хуллен... Атту унти халӑхсем пит усал... Пӑшалпа та шартлаттарма ӳркенмӗҫ. Ҫамку ҫине паллӑ тӑвӗҫ, сисеймӗн те...

Кимӗ пӗр сасӑсӑр ишсе пынӑ. Пӗр кӳсменсем ҫинҙен анҙах ҫутӑ тумламсем тинӗс шывӗ ҫине перепере ӳкнӗ. Тумлам ӳкнӗ ҫӗрте пӗр

вăхăт çутă çунса тăнă, унтан вăл сӳннĕ. Çĕр тĕттĕмрен тĕттĕмрех пулнă... Сасҫĕвĕ илтĕнмен. Пĕлĕтсем халĕ тăвăлпа хумханакан тинĕс пек курăнман, вĕсем халĕ çанталăка хупхура ҫатăр пек карса илсе пĕр шумасăр тăнă. Тинĕс хуралса çитнĕ, лăпкă пулнă, ашă тăвар шăрши сăмсана кĕнĕ. Халĕ пaçăрхи пек тинĕс сарлака курăнман.

— Ех, çумăра йаринҫҫĕ!—терĕ Ҫĕлкаш,—вара епĕр хӳме хыçĕнҫе пынă пек пырăттăмăр...

Кимĕн сылтăм йенҫен те сулахай йенҫен те, хура шывран хура паршăсем тухрĕç. Пĕрин çинҫе хунар çутти курăннă, такшин хунарпа çӳренĕ. Тинĕс паршăсем çумне пырса çапăнса темĕскер ыйтнă пек шавланă. Паршăсем тинĕсе хирĕç йанăраса, тинĕспе тавлашнă.

— Хуралсем, тенĕ хуллен кăна Ҫĕлкаш.

Каврила каллех хăрама пуçланă. Темĕскер усал килес пек туйăннă.

Вăл малалла тăсăлса пăхса пынă; унăн шăммисем, шăнăрĕсем, йун тымарĕсем пысăкланса ӳснĕ пек туйăнна; пусĕ пĕр шухăшпа тулнăскер, шартлатса çурăлас пек ыратнă; çурăм тирĕ хур тирĕ йевĕрлĕ пулса тăнă; урисене сивĕ йĕпсем ҫикнĕ пек туйăннă; куçĕсем тĕттĕме пăхнипе ыратнă. Каврила кашни самантрах,—акă, акă пĕри тăрĕ те: ҫарăнăр, вăрăсем! тесе кăшкăраснсине кĕтнĕ.

Халĕ Ҫĕлкаш,—хураясем, тесенех Каврила шартах сикрĕ: çивҫĕ, вут пек шухăш ун витĕр тухрĕ, тухрĕ те ăна ҫĕтреттерсе хăварҫĕ—вăл кăшкăрасшăн, хăйне пулăшма çынсене ҫĕнесшĕн пулнă... Вăл йнтĕ çăварне те уçнă, кимĕ ларкăçĕ синҫен те пăртак тăнă, кăкăрне те сывлăш тултарнă кăшкăрасшăнах пулнă... анҫах сасартăк хăранипе аçа çапса амантнă пек куçĕсене тавăрса пăрахса кимĕ тĕппе персе ӳкнĕ...

Кимĕн мал йенҫен, таçтан, хура шывран вутлă хĕç тухрĕ, тухрĕ те

çĕр тĕттĕмне касрĕ, пĕлĕтсем çинҫе шурĕ те тинĕс кăкăрĕ çине çапçутă çул пек тăсăлса выртрĕ. Выртрĕ те вăл сутатнипе халĕҫҫен курăнман кимĕсем, паршăсем çутă çине тухрĕç. Çак кимĕсем нумайҫҫен тинĕс тĕпĕнҫе выртса, çак çутă хĕç хушнипе анҫах тухнă пек туйăннă. Вĕсен маҫтисем, хатĕрĕсем, тинĕс тĕпĕнҫе ӳсекен куракксем пек курăннă... Хайхи хĕç тинĕс çинҫен тăҫĕ те каллех пĕлĕтсене ухтарма пуçларĕ, унтан каллех тинĕс çине ӳкрĕ. Каллех çутă çине паршăсем ишсе тухрĕç.

Ҫĕлкаш кимми ҫараннă та пĕр вырăнта сиккелесе тăнă. Каврила питне аллисемпе хупласа кимĕ тĕпĕнҫе выртнă. Ҫĕлкаш ăна урисемпе тапса çиленнипе вăрçса тăратнă.

— Ухмах, вăл çар карапĕ çинҫен вĕт... Прошектăр вăл!.. Асту, пирĕн çине çутă пăрахаççĕ вĕт!.. Тăр, шуйтан, мана та хăна та ахалех пĕтеретĕн! Тăр!..

Йулашкинҫен Ҫӗлкаш ури Каврила сурӑмӗ ҫине хытӑрах ӳкнӗ те вӑл вара сиксе тӑнӑ, анҫах куҫӗсене уҫма халӗ те хӑранӑ; вӑл кӳсменӗсене хыпашласа тупнӑ та ларкӑҫӑ ҫине ларса ишме пуҫланӑ.

— Хуллен! Вӗлеретӗп! Хуллентерех!.. Ех, ухмах, шуйтан пукани!.. Мӗнрен хӑрарӑн? Кала? Хунарпа куҫкӑски кӑна вӗт вӑл... Хуллентерех кӳсменӳсемпе... Йӳҫӗ шуйтан!.. Куҫкӑскине ҫавӑркалаҫҫӗ те тинӗсе ҫутатаҫҫӗ, пирӗм пеккисем ҫуки, тесе. Вӑрӑсене пӑхаҫҫӗ... Пире хаљ ҫаклатаймаҫҫӗ ӗнтӗ—инҫе кайнӑ вӗсем. Ан хӑра, пире тивмеҫҫӗ. Хаљ епӗр...—Ҫӗлкаш кулкалама пуҫларӗ. Ишсе тухрӑмӑр! Ху—у!.. Ну, телейлӗ те есӗ, урттӑш йӑвӑҫ ҫукмарӗ!..

Каврила ним ҫӗнмесӗр ҫутӑ ҫӗҫ йеннелле пӑхса ишнӗ. Вӑл ҫак ҫутӑ—хунар ҫутти иккенне нийепле те ӗненмен. Сивӗ ҫапҫутӑ хӗҫ, ҫӗр тӗттӗмне касакансқер, тинӗсе кӗмӗл

пек çутатаканскер, Каврилана пит хăрушăн туйăннă. Вăл ним шухăшламасăр машшин пек ишнĕ. Ун ăшĕнҫе ним те йулман. Çак çĕр хăранисем унăн ĕтемлĕхне пĕтĕмпех пĕтернĕ.

Ҫĕлкашан ĕçĕ ăннă.. Вăл халĕ лăпланнă, пĕр măйăхĕ анҫах сикнĕ, тата куçĕнҫе çын пурлăхне хапсăнакан вут çуннă. Ҫĕлкаш халĕ шăхăркаласа, йĕритавра пăхкаласа, кулса ларнă. Каврила ишнĕ.

Тинĕс çинҫе çил вĕрме пуçланă. Шыв шатраланнă. Пĕлĕтсем пăртак çӳхелнĕ, анҫах çапах та тинĕс çине карсах тăнă, темĕскер тинĕс тĕксĕмленсе шухăшласа выртнă пек туйăннă.

— Ей, тăван, вăран ĕнтĕ! Мĕнле сана, тирӳнтен сывлăшна вĕрсе кăларнă пек тунă, пĕр хутаç шăмă анҫах йулнă!.. Савнă тусăм!.. Ĕçе пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Ей!..

Каврила çын сасси илтнĕ те, вăл вăрă Ҫĕлкаш сасси пулсан та, хĕпĕртенĕ.

— Епĕ илтетĕп, тенĕ вăл.

— Çавă—çав! Çăкăр çемçи... Лар-ха кимĕ хўрине, епĕ кўсменсем тытам, атту ыванна пулĕ есĕ!

Каврила хăй выранне пĕр хирĕç-месĕр панă. Ҫĕлкаш выранне улăш-тарнă ҫухне Каврила урисемпе алли-сем ҫетренине курнă. Вăл Каврила-на шелленĕ. Вăл унăн хулпуççи çи-не аллине хунă та:

— Мĕн хăратăн? Ан хăра! Епĕ сана нумай укçа парăп. Çирĕм пи-лĕк тенкĕ çитĕи?

— Манаи?.. Ним те кирлĕ мар. Тинĕс хĕррине кăна тухасҫҫĕ. Ҫĕл-каш аллипе сулнă, сурнă та кўсме-нĕсене вăрăм алăсемпе хыçала ыйт-са ишме тытăннă...

Тинĕс вăрана пуçланă. Вăл пĕҫĕк хумсемпе выҕанă, вĕсене çуратнă, вĕсен çине кăпăк ҫĕнтĕр хурса вĕ-сене пĕр пĕринпе çапăçтарса вĕсе-не вĕтçеççĕ шыв тусанĕ тунă. Ти-нĕс кăпăкĕ пăшăртатса ҫĕтресе тă-нă. Таврари тĕттĕм ҫĕрĕ пек туйăн-нă.

— Каласа парха мана, тенӗ Ђӗлкаш,—ну, киле таврӑнӑн есӗ, авланӑн, ҫӗр ђавма тытӑнӑн, тырӑ акӑн, арӑму ађасем туса парӗ, ҫимесем ҫитмӗҫ, хӑвӑн пурнӑҫӑнта асапланӑн... мӗн вара? Нумайи вара аванни?

— Мӗн ӗнтӗ аванни!—тенӗ Каврила,—мӗн ӗнтӗ...

Вырӑнӗпе ҫил пӗлӗтсене тататата пӑрахнӑ. Татнӑ ҫӗрте кӑнкӑвак пӗлӗт курӑннӑ. Кӑнкӑвак пӗлӗт синђе икиҫ ҫӑлтӑр ҫунса тӑнӑ. Тинӗс шывӗ ҫине ӳксе ҫак ҫӑлтӑрсем выђаса тӑнӑ.

— Сылтӑмарах тыт,—тенӗ Ђӗлкаш.—Ӗнтӗ нумай йулмарӗ. Ђас ҫитетпӗр. Ӗҫе пӗтертӗмӗр. Ӗҫ ӑнђӗ. Куртӑни мӗнле?.. Пӗр ҫӗр хушшинђех ҫур пин тенкӗ шаплаттартӑм!.. Е? Мӗнлеха ку йапала?

— Ҫур пин?!.. Каврила Ђӗлкаша шансах пӗтереймен, унтан кимӗ тӗпӗнђе выртакан ҫыхӑсене урипе тапса:—вара кӑсем мӗнле йапала? енӗ.

— Кăсем ҫӗнтӗр, хаклă йышши ҫӗнтӗр. Тӗрӗс хакпа сутас пулсан —пин тенкӗрен те ытла тăрать. Анҫах епӗ йӳн хакпах паратăп...

— Ех, ку укҫасем мана пулсанҫҫӗ... тенӗ Каврила. Ҫав вăхăтрах ӳн нуҫне йал пурнăҫӗ те, килҫурҫӗ те, нушисем те, амăшӗ те, пур тăванӗсем те, ҫырма шывӗ те, хăввисем те, пилешӗсем те, ҫӗмӗрҫӗсем те аса килсе кӗнӗ. Ҫак аса илнисем Каврила кăмăлне ăшăтса ăна хăпартса йанă.

— Ех, лайăхҫҫӗ!.. тесе вăл тарăнăн сывласа илнӗ.

— Епӗ шухăшлатăп, есӗ халех ҫукунккă ҫине ларăттăн та килелле вӗҫтерӗттӗн... Килте хӗрсем сана йуратăҫҫӗҫ, ех! Хăшӗ кăмăла кайать, ҫавна ил!... Ҫурт тăвăттăн.., анҫах ҫурт тума укҫу сахалтарахҫке...

— Ҫăнахҫке вăл... ҫурт тума ҫитмеет ҫав... Пирӗн йенҫе вăрман пит хаклă...

— Мӗн вара? Киввине тӳрлетӗттӗн. Лашу пури санăн?

— Лашан? Пур та, пит ватӑ. . шуйтан.

— Тата лаша, пит лайӑх лаша, ӗне, сурӑхсем, ҫӑхҫӗп туйанӑттӑн...Е?

— Ан калаҫ та ӗнтӗ! Ех, турӑ! Апла пулсан пурӑнма пӗлӗттӗм!

— Ҫапла ҫав... пурнӑҫ пулӗҫҫӗ... Епӗ те ун ҫинҫен пӗлетӗп вӗт. Ман хамӑн та йӑвва пулнӑ вӗт... Ман атте йалта пӗр пуйанҫҫӗ...

Ҫӗлкаш хуллен кӑна ишнӗ. Кимӗ хумсем ҫинҫе выҫаса пынӑ. Тинӗс шывӗ кимӗ ҫумне пыра-пыра ҫапӑннӑ. Икӗ ҫын кимӗ ҫинҫе шухӑша кайнӑ. Ҫӗлкаш йал пурнӑҫӗ ҫинҫен калаҫса Каврила кӑмӑлне хӑпартса ӑна лӑплантарасшӑн пулнӑ. Малтан вӑл кулкаласа калаҫнӑ, унтан хӑй те, ҫӑнҫӑнах, пӗҫӗккӗ ҫухнехисене аса илсе шухӑша кайнӑ. Вара вӑл Кавриларан ыйтас вырӑнне, хӑй ӑна йал ҫинҫен калама пуҫланӑ.

— Хресҫен пурнӑҫӗнҫе пуринҫен ытла ирӗк ӗнтӗ ҫав! Хӑвна ху хуҫа

ӗнтӗ. Санӑн ҫурт пур—хакӗ пӗр пус пулсан та санӑн вӑл. Ҫӗр пур—пӗр ывӑҫ пулсан та—санӑн! Ху ҫӗру ҫинҫе!.. Патша есӗ. Санӑн йату пур... Ҫаплаи? тесе пӗтерҫӗ Ҫӗлкаш.

Каврила ун ҫине пӑхса, унӑн сӑмахӗсене итлесе, хӑй умӗнҫе кам ларнине, тата вӑл мӗнле ӗҫпе пурӑннине, пурне те, манса кайнӑ. Вӑл хӑй умӗнҫе хӑй пекех хресҫен сыннине анҫах курнӑ. Ку ҫын Каврилашӑн йалтан тарнӑ ҫын кӑна пулнӑ.

— Ку, тӑванӑм, питӗ тӗрӗс! Ех, тӗрӗс те! Акӑ ху ҫине пӑхха, мӗнле есӗ ҫӗрсӗр? Ҫӗре, аннӳ пекех, нихӑҫан та манмалла мар.

Ҫӗлкаш шухӑша кайнӑ пулнӑ... Вӑл Каврила, ҫӗре нихӑҫан та манмалла мар, тесенех сасартӑк ҫиленнӗ.

— Авӑртма пуҫларӗ!.. тенӗ вӑл, —есӗ шухӑшланӑ пулмалла—епӗ тӗрӗссипе тесе... Ҫук!.. Хӑлхине ус сах хунӑ!

— Тӗлӗнмелле ҫын, тенӗ ҫӗнӗрен хӑраса Каврила.—Епӗ сан ҫинҫени вара? Сан пеккисем нумай. Ех, мӗн ҫухлӗ ҫут тӗнҫере телейсӗр халӑх сӗтрӗнсе ҫӳрекенсем...

— Лар, пӑру, ху вырӑнна!—кӗске кӑна хушнӑ Ҫӗлкаш. Ҫиленнипе карланки патне ҫурхи шыв пек капланса усал сӑмахсем тапӑннӑ, анҫах темӗншӗн Ҫӗлкаш нимӗскер те калайман.

Вӗсем каллех вырӑнӗсене улӑштарнӑ. Кимӗ ҫинҫе выртакан ҫыхӑсем урлӑ каҫнӑ ҫухне Ҫӗлкаша ҫиленнипе Кавриланa шыва тӗртсе йарас шухӑш кӗнӗ.

Калаҫу ҫарӑнҫӗ, анҫах ҫапах та Ҫӗлкаш йал ҫинҫен калаҫнине манаймаст... Вӑл хӑйӗн ӗлӗкхи пурнӑҫне аса илнӗ те кимӗ ӑҫта кайнине те пӑхма ҫарӑннӑ...

Хумсем кимме тытса пӗрре ҫӳле хӑпартнӑ, тепӗре антарнӑ, выҫанӑ. Кӳсменсем хыҫҫӑн ӗлӗкхи пекех кӑвак ҫутӑ суталса пынӑ. Ҫӗлкаш ку-

çĕ умĕнҫе ĕлĕкхи карттинсем, вунпĕр çул малта пулнисем, тинĕс çинҫи пĕлĕт пек шуса пынӑ. Вӑл хӑй аҫа пулнине курнӑ, хӑйĕн йалне, амӑшне—хĕрлĕ питлĕ ҫакӑр куçлӑ хĕрарӑма, ашшĕне—сар сухаллӑ пысӑк çынна; унтан хайне каҫҫӑ пулнине курнӑ, унтан хӑй арӑмне хуракуçлӑ Анхвиссӑна, вӑрӑм çӳçлĕ, мӑнтӑр, çемçескере... Унтан хӑйне салтакра курнӑ; унтан каллех ашшĕпе амӑшне, иккĕшне те ватӑлнӑскерсене, унтан вӑл йала салтакран таврӑннине курнӑ, ашшĕ хӑйĕн ывӑлĕпе мухтаннине астунӑ... Çын ӑспуçĕ, телейсĕрсен пушши, ĕлĕкхи пурнӑçӑн ҫулĕсене те ҫĕртет, ĕлĕк ĕçсе йанӑ наркӑмӑша та ыл тути парать.

Ҫĕлкаш шухӑшсемпе кӑна тӑван сывлӑшра пулсан та, ашшĕ-амӑш сӑмахĕсене астуса, такçанах маннӑ çĕр шӑшине астуса—çемçелсе лӑплансах кайнӑ. Вӑл йалтан уйрӑлнине, унтан тымарĕпех тухнине астусан кайран хурланнӑ.

— Ĕй, ăçталла ишетпĕр?— тесе ыйтнă Каврила. Ђĕлкаш шартах сикнĕ те караппăл пек пăхкаласа илнĕ.

— Е, шуйтан, илсе кĕнĕ!.. Йурĕ... Çăрарах ишха... Çитетпĕр ĕнтĕ.

— Шухăша кайрăни? терĕ Каврила.

— Ывăнтăм... Тата хумсем те силлеççĕ...

— Ђăнах силлеççĕ çав... Халĕ ĕнтĕ епĕр çаксемпе çакланмастпăри? тесе ыйтнă çыхăсене кăтартса Каврила.

— Çук.., Ан хăра. Халех ак вырăна çитетпĕр те укçа илетпĕр.. Акă!..

— Пилĕк çĕри?

— Унтан сахал мар пуљ...

— Пысăк укçа! Ех, ку укçасене мана парасђђĕ! Ех, йурласа йарăттăм епĕ йуррăма!..

— Хресђенлеи?

—Халех йурра йарăттăм!..

Каврила шухăш сунаттисем çине ларат те вĕçтерет. Ђĕлкаш ним те

ҫӗнмест. Мăйăхӗсем ун усăнса аннă, сылтăм айакӗ шыв кăна пулнă—хумсем ҫапнă, куҫӗсем тӗттӗмленнӗ, сӳннӗ. Ун тумтирӗн кашни хуплантăкӗнҫенех шухăшлани курăнса тăнă, унăн мӗлки те ҫемҫелсе анса ларнă.

— Епӗ те ывăнтăм... Йурăхсăр хытă ывăнтăм;—тенӗ Каврила.

— Акă халех ҫитетпӗр ӗнтӗ... Ав ҫавăнта...

Ҫӗлкаш киммине темӗскер хура йапала йеннелле иштернӗ.

Ҫумăр пӗлӗҫӗсем ҫӗнӗрен тинӗсе карса илнӗ те вӗҫҫеҫҫӗ ăпă ҫумăр ҫăва пуҫланă. Хум ҫурăмӗсем ҫине ӳксе вӗсем хуллен шавланă.

— Ҫарăн! Хуллен!—тенӗ Ҫӗлкаш.

Кимӗ паршă ҫумне пырса ҫарăннă.

— Те ҫывăраҫҫӗ, шуйтансем? тесе вăрҫкаласа Ҫӗлкаш ҫӳлтен анакан вӗренсем ҫумне пакурпа ҫакланнă.

Ҫумăр ҫăваҫ тата... Паҫăртарах ҫикмекне ҫакмаллаҫҫӗ... Ей, купкăсем, ей?..—кăшкăрнă Ҫӗлкаш.

— Шалкаши ку? тенӗ ҫӳлтен.

— Ну, ҫасрах антар ҫикмекне!

— Калимерӑ, Ҫӗлкаш!

— Антар ҫикмекне, хура шуйтан! —кӑшкӑрса йанӑ Ҫӗлкаш.

— У, пайан ҫиленсе килнӗ... Усал!..

— Хӑпар, Каврила!—тенӗ хӑй йулташне Ҫӗлкаш.

Пӗр самантрах иккӗшӗ те паршӑ ҫине хӑпарнӑ.

Кунта виҫӗ пысӑк сухаллӑ мӗлке темӗскерле ҫӗлхепе калаҫса Ҫӗлкаш кимми ҫине аллисемпе тӑса-тӑса кӑтартнӑ. Тӑваттсӑмӑшӗ, ҫӗтӗк-ҫатӑк вӑрӑм тумтир тӑхӑннӑскер, Ҫӗлкаш патне пырса унӑн аллине тытса силленӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Каврила ҫине пӑхса илнӗ.

— Ире укҫа хатӗрле,—терӗ кӗске кӑна Ҫӗлкаш. Халӗ епӗ сывӑрма кайатӑп. Каврила, аҫа! Ҫийес килети?

— Сывӑрасҫӗ... тенӗ те пилӗк минутран Каврила паршӑ ӑшне кӗрсе хуп турттарма пуҫланӑ.

Ђӗлкаш унпа ҫуммӑн ларса такшин аттине—йураҭи йурамасҭи тесе тӑхӑннӑ, унтан вӑл аттине кайалла хывнӑ. Унтан шӑл витӗр шӑхӑрма пуҫланӑ. Шӑхӑрсан шӑхӑрсан аллисене пуҫӗ айне хурса Каврила ҫумне тӑсӑлса выртнӑ.

Паршӑ выђакан шыв ҫинђе хӳллен кӑна силленсе тӑнӑ. Таҫта йӑвӑҫ ђӗриклетни илтӗннӗ, ҫумӑр шӑпӑргаттарнӑ...

Пит хуйхӑлӑ туйӑннӑ. Ҫак сасӑсем сӑпкара выртакан ађа валђђи йурлакан йурӑ пек илтӗннӗ...

Ђӗлкаш, шӑлӗсене йӗрсе пӑрахса, пуҫне ҫӗкленӗ те пахнӑ... темскер каланӑ, унтан, каллех выртнӑ... Урисене сарса пӑрахнӑ та пысӑк хађӑ пек пулса выртнӑ.

III.

Ђӗлкаш Кавриларан малтан ҫывӑрса тӑнӑ; тӑнӑ та вӑл хӑй тавра пӑхкаланӑ; ҫывӑракан Каврилана курсан лӑпланнӑ. Лешӗ харӑлтаттарса ҫы-

вăрнă, тĕлĕкĕнҫе такама курнă. Ҫĕлкаш вăрăммăн сывласа илнĕ те, вĕрен пусмапа ҫӳле хăпарнă. Ҫӳле хăпармалли шăтăк витĕр тăхлан тĕслĕ пĕлĕт курăнса тăнă. Ҫутăлнă, анҫах кĕркуннехи пек ҫанталăк тĕксĕм пулнă.

Ҫĕлкаш икĕ сехетрен кайалла килнĕ. Пиҫĕ унăн хĕпхĕрлĕ пулнă, мăйăхĕсене пĕтĕрсе ҫӳлелле тăратнă, хăй кулкаласа анҫах тăнă; тата Ҫĕлкашăн тумтирĕ те халĕ лайăх пулнă—урисенҫе вăрăм кунҫалă сăран атăпа сăран шăлавар, хулпуҫҫи ҫинҫе лайăх пиншак пулнă.

Ҫапла тумланса Ҫĕлкаш оххотнĕк йĕвĕрлех курăннă. Унăн тумтирĕ ҫĕнех пулмасан та тĕреклĕ пулнă, ниҫта та пĕр ҫĕтĕк те курăнман. Тумтирĕ Ҫĕлкаша пит килĕшнĕ.

— Ей, пăру, тăр!..—Ҫĕлкаш урапа тапса Каврилана тăратнă. Лешĕ сиксе тăрса, тĕлĕкпе нимĕскер пĕлмесĕр, Ҫĕлкаша пăхса тăнă. Ҫĕлкаш кулса йанă.

— Акӑ есӗ мӗнле!.. Улпут пулнӑçке тенӗ Каврила.

— Пирӗн йышшисем ҫас улпут пулаççӗ çав. Ей, хӑравçӑçке есӗ!.. Ай-йай-йай! Миçе хут кӗçӗр вилме хатӗрлентӗн? Е? Калаха?

— Ху пӗлен вӗт... Çакӑн пек ӗçре пулман епӗ... Ҫуна пӗтӗмпех çухатмалла пулҫӗ те!..

— Ну, тата тепӗр хут пыратӑни? Е?

— Татаи? Мӗнле сана калас? Мӗн ҫухлӗ тупӑшӗ, çавӑн тӑрӑх... акӑ мӗн!..

— Калӑпӑр, икçӗр тенкӗ?

— Икçӗр тенкӗи? Апла пулсан каймалла...

— Ҫимха! Ҫунна çухатсан?..

— Çапла та тата пулма пултаратçке. Çухатмӑнта шет? тенӗ кулса Каврила.—Ҫунна çухатмӑн, ӗмӗре çын пулса тӑрӑн... Ҫӗлкаш кулнӑ.

— Ну, йурӗ! Çитӗ сӑмах вакламa. Аҭа тинӗс хӗррине... Хатӗрлен!

— Мӗн мана хатӗрленесси—епӗ хатӗр!

Акӑ вӗсем каллех кимӗ ҫинҫе. Ҫӗлкаш кимӗ хӳринҫе, Каврила кӳсменсем хушшинҫе. Ҫанталӑк пӗлӗтлӗ пулнӑ. Пӑтранҫӑк симӗс тинӗс шывӗ кимӗпе выҫаса ӑна ҫӳлелле ҫӗкленӗ; хумсем кимме пыра-пыра ҫапӑннӑ. Кимӗн мал йенҫе сарӑ хӑйӑрлӑ тинӗс хӗрри курӑннӑ; сылтӑмра ирӗклӗ ҫупса ҫӳрекен хум кӗтӗвӗсем, вырӑнӗпе шур кӑпӑкпа ҫӗнтӗрленнӗскерсем капӑрланнӑскерсем курӑннӑ. Ҫав йенҫех, инҫерех, тем ҫухлӗ кимӗсем, паршӑсем, тинӗс кӑкӑрӗ ҫинҫе хумханса тӑнӑ. Таҫта инҫетре, сулахай йенҫе, хула —шурӑ ҫуртсемпе сарӑлса выртнӑ, кунтарах вӑрман пек праххут маҫтисем курӑннӑ. Хула йенҫен пӗр ҫарӑмасӑр кӗмсӗртетсе тӑракан сасӑсем килнӗ; тинӗс сассисемпе хула сассисем вӑйлӑ, лайӑх мусӑк пулса тӑнӑ... Ҫанталӑк тӗтреллӗ пулнӑ, ҫавӑнпа йапаласем пӗрпӗринҫен инҫе пек курӑннӑ...

— Ех, вылҗама пуҫлаӑт ӗнтӗ ку каҫхине,—тенӗ Ҫӗлкаш тинӗс йенне пуҫне сулса.

— Тӑвӑл пулаӑти? тенӗ хирӗҫ Каврила.

Вӑл паттӑр кӑна хумсене ҫурса пынӑ. Хӑй йӗп-йӗпе пулнӑ, ҫав тӗрлӗ хумсем сирпӗвнӗ.

Вара!.. тенӗ Ҫӗлкаш.

Каврила Ҫӗлкаш ҫине пӑхнӑ...

— Ну, мӗн ҫухлӗ вара сана паҫӗҫ? тесе ыйтнӑ, мӗнле те пулсан Ҫӗлкаша калаҫтарас тесе, Каврила.

— Акӑ!—тенӗ кӑсйинҫен кӑларса кӑтартса Ҫӗлкаш.

Каврила асамат кӗперӗ тӗслӗ хут укҫасем курсан, тӗлӗнсех кайнӑ; куҫӗ-пуҫӗ алҫӑрасах кайнӑ. Пур йапала та вара Каврилана асамат кӗперӗ тӗслӗ курӑна пуҫланӑ.

— Мӗн ҫухлӗ ку? Епӗ есӗ улталарӑн пулӗ тесе!..

— Пилӗк ҫӗр хӗрӗх! Лайӑхи?

— Лайӑх пулмасӑр!.. Ех, ҫав укҫасене мана парасҫҫӗ!,, Каврила ҫав

укҫасене хăйне илесшĕн шухăшлама пуҫланă.

— Ну пĕрле кулӡаҭ тăвăпăр ĕнтĕ аӡа! тесе кăшкăрса йанă Ӡĕлкаш.— Ех, йарăпăр!.. Ан хăра, ан хăра, епĕ сана улталамăп... Хĕрĕх тенкĕ парăп! Е? Ҫитĕи? Кирлĕи, халех парам?

— Хăвăра йураҭ пулсан... епĕ йышăнăп! Каврила укҫине кĕтнипе ӡĕтресе тăнă, кăкăрне темĕскер ĕмсе тăнă пек туйăннă.

— Ха, ха, ха!.. Шуйтан пукани, есĕ!.. Йышăнăп! Йышăн тархасшăн, шăллăм! Татах тархаслатăп, йышăн! Епĕ ҫавăн ӡухлĕ укҫа купине нисҫта хума пĕлместĕп! Мана укҫаран хăтарха, акă йышăнха, акă!..

Ӡĕлкаш Каврилана виҫтăват хĕрлĕ хут укҫа панă. Лешĕ укҫине ӡĕтрекен аллисемпе илнĕ те кӳсменĕсене пăрахса хĕвне персе ӡикнĕ; хăй йӳҫĕ йапала ĕҫнĕ пек хăтланнă, хытă сывланă. Ӡĕлкаш Каврила ҫине кулса пăхса тăнă. Каврила кӳсме-

йӗсене илнӗ те ҫӗнӗрен куҫӗсене айала ҭиксе хӑвӑртрах ишме пуҫланӑ.

— Непсӗҫке есӗ!.. Лайӑх мар... Анҭах мӗн тӑвас, хресҭен ҫынни вӗт... тенӗ хӑйне хӑй Ҭӗлкаш.

— Вӗт укҫапа тем те тума пулат!.. тенӗ хирӗҫ Каврила.

Вара вӑл васкаса, сӑмахсене тупаймасӑр, ҭыхӑнсах йалта укҫасӑр мӗнле наҭар пурӑннине, укҫапа мӗнле лайӑх пурӑннине калама тытӑннӑ. Укҫапа—лӑпкӑ пурӑнӑҫ, савӑнӑҫ, сума суни!..

Ҭӗлкаш пӗр ҭӗнмесӗр ларса Каврилана итленӗ. Вӑхӑҭӗпе вӑл сасӑсӑр кулнӑ.

— Ҫитрӗмӗр!—терӗ Ҭӗлкаш Каврила калаҫнине ҭарса. Тинӗс хумӗ вӗсен киммине ҫӗклерӗ те хӑйӑр ҫине лартса хӑварҭӗ.

— Ну, халӭ, шӑллӑм, ӗҫ пӗтрӗ. Киммине хумсем илсе ан кайҭҭӑр тесе маларах туртар, атту ӑна илме килеҫҫӗ. Епӗр вара пӗрпӗрне—сы-

вă пул, тейĕпĕр те утăпăр. Кунтан хулана çитиҫҫен сакăр çухрăм. Мĕнле есĕ каллех хулана таврăнатăни? е?

Ҫĕлкаш аллине кăсйине ҫикса хут укçисене шăтăртаттарса тăнă; Ҫĕлкаш пиҫĕ куçĕ çап çутă пулнă. Вăл Каврилашăн темскер лайăх ĕç тăвас пек шухăшласа тăнă.

— Çук... епĕ... каймастăп.. епĕ... —тенĕ те Каврила ҫыхăннă. Ун ăшĕнҫе шутсăр нумай хапсăнусем, сăмахсем, калаçусем вĕркенĕ, вĕсем пĕрпĕрне çăтнă, кышланă, Каврилана çулăмсăр çунтарнă.

Ҫĕлкаш Каврила çине тĕлĕнсе пăхнă.

— Мĕн сана капла хуçкалат? тесе ыйтнă вăл.

— Ахаҫ вăл...

Каврила пиҫĕ пĕрре хĕрелнĕ, пĕрре хуралнă, тепре шуралнă. Вăл пĕр вырăнта тăрса хăйăра таптаса тăнă. Темскер тăвасшăн пулнă.

Ҫакна курсан Ђӗлкаш хӑранӑ пек пулнӑ. Вӑл, ку йапала мӗнпе пӗтӗха, тесе кӗтсе тӑнӑ.

Каврила йӗнӗ йевӗрлӗ кулма тытӑннӑ. Пуҫӗ ун усӑнса аннӑ, пӗрре хӗрелсе, пӗрре шуралса тӑракан хӑлхисем анђах курӑннӑ.

— Ей, ађа! Мӗн сана кирлӗ, кала? Атту епӗ кайатӑп! Мӗн елле мана йуратса кайрӑни? Хӗрарӑм пек тӑратӑн! Ей манпа уйрӑлни сана йӑвӑри?—тенӗ Ђӗлкаш.

— Кайатӑни?!—тесе хытӑ сасӑпа ҫухӑрса йађӗ Каврила. Тинӗс хӗррийӗ шартах сикрӗ, тинӗс хумӗсем те хумханса илђӗҫ. Ђӗлкаш та шартах сикрӗ. Сасартӑк Каврила хӑй вырӑнӗнђен тӑђӗ те Ђӗлкаш урисем патне ӳкрӗ, хӑйӗн аллисемпе вӗсене ыталаса илђӗ те хӑй йенне туртрӗ. Ђӗлкаш сулӑнса кайрӗ те сылтӑм аллине ҫӗклесе хӑйӑр ҫине тӑсӑлса ӳкрӗ... Ђӗлкаш Каврилана ҫапма ӗлкӗреймерӗ — Каврила йӑлӑнма пуҫларӗ:

— Тăванăм, пар—мана... вăл укçасене!.. Христус турăшăн пар!.. Мĕн сана вĕсем?

Вĕсене вĕт ес пĕр каçрах тупрăн... Мана вăл укçана тупма темиçе çул кирлĕ... Пар, саншăн кĕлтăвăп! Ĕмĕрех... виçĕ ҫиркӳре... ҫуну çăлăнтăр, тесе!.. Вăл укçасене есĕ çиле йаратăн... епĕ çĕр ĕçне хурăттăм... Пар мана вĕсене!.. Мĕн вĕсем сана?.. Елле хаклăи вĕсем? Пĕр каç кăна... есĕ каллех пуйма пултаратăн. Ырă ĕç ту! Çухалнă çын вĕт есĕ... Сана çул та çук... Епĕ... пар мана вăл укçасене!..

Ҫĕлкаш, хăранăскр, тĕлĕннĕскер, çилленнĕскер хăйăр çинҫе кутăн, аллисемпе тĕреленсе, ним ҫĕнмесĕр ларса, ҫĕркуççисем патĕнҫе ларса ыйтакан Каврила çине кусĕсене тавăрса пăрахса пăхнă. Унтан вăл Каврилана тĕртсе йанă та урисем çине сиксе тăнă, кăсйине аллине ҫикнĕ те укçисене кăларса Каврилана ывăтса пенĕ.

— Ме, кўп... тесе кăшкăрса йанă çиленнипе, шелленипе, курайманнипе, ҫĕтресе Ҫĕлкаш.

— Епĕ хам сана нумайрах парасшăнҫҫĕ... Ĕнер йал çинҫен шухăшларăм та... Епĕ, есĕ мĕн тăвăн тесе кĕтрĕм... Есĕ... Ех, кĕççепит! Кĕлĕмçĕ!.. Укçашăн хăна ху çапла çунтарма йураĭи вара?.. Ухмах! Ĕмĕтсĕр шуйтансем!.. Хăйсене хăйсем астумаççĕ... Пилĕк пусшăн хăйсене сутаççĕ! е?

— Тăванăм!.. Христус сана çăлтăр! Вĕт халĕ епĕ çĕрме пуйан пулма пултаратăп!.. халĕ епĕ пуйан! тесе савăнса, савăннипе ҫĕтресе укçисене хĕввине ҫикнĕ Каврила.—Нихăçан та манмăп сана!..

Манмăп... Нихăçан та... Арăма та аҫасене те саншăн кĕл тума хушса хăварăп...

Ҫĕлкаш Каврила савăнни çине пăхса, хăй вăрă пулсан та çав тĕрлĕ ĕмĕтсĕр, хапсăнакан, хăйне астуман çын пулманни çинҫен шухăшланă.

Нихăçан та çак çын пек пулас çук... Çак шухăш ăна Каврила çумĕнҫе тинĕс хĕрринҫе тытса тăнă.

— Телейлĕ турăн есĕ мана!—тесе калаçнă Каврила; хăй Ҫĕлкаш аллине тытнă та ҫуптума пуçланă.

Ҫĕлкаш ним ҫенмесĕр, шăлĕсене кашкăр пек йĕрсе тăнă.

Каврила хăйпе калаçнă:

— Мĕн еп шухăшланă, ишсе пыратпăр епĕр кунта... укçисене... епĕ куртăм... пуçĕнҫен кăна... кӳсменпе парас... укçине... илес те хăйне тинĕсе... пăрахас... сана... е? Кам ăна шырĕ? Тупсан та, кам вĕлернине, ăçта вĕлернине тĕпҫемĕç. Вăл навус, терĕм... Кирлĕ мар çын вăл çĕр çинҫе! Кам уншăн тăрăшĕ?..

— Пар калла укçусене!.. Ҫĕлкаш Каврила карланкинҫен йарса тытнă.

Каврила пĕрре туртăннă, иккĕ туртăннă...

Ҫĕлкашăн тепĕр алли çĕлен пек Кавриланa йавса илнĕ те кĕпине çурнă. Каврила урнă çын пек ку-

çĕсене ҫарса хăйăр çинҫе тапаланса выртнă. Ҫĕлкаш, тÿрĕ, хыткан, усал-ескер, шăлĕсене йĕрсе, мăйăхĕсене сиктерсе, хе-хе-хе, тесе вĕҫҫеççĕ кулнă... Нихăçан та ăна хăйĕн ĕмĕрĕнҫĕ никам та çапла хытă ыраттарман, нихăçан та вăл хаљхи пек усал пулман.

— Мĕн, телейлĕи халĕ? кулса ыйтнă, Кавриларан Ҫĕлкаш. Хирĕç каланине кĕтмесĕр тумасăр Ҫĕлкаш хула йеннелле утнă. Анҫах вăл икĕ утăм та пусман, Каврила, кушак пек, пĕр ҫĕркуççи çине тăрса Ҫĕлкаша, рас! тесе ҫăмăр ҫулпа пуçĕнҫен пенĕ. Ҫĕлкаш, аллисемпе ĕнсине тытса малалла пĕрре утнă та, унтан Каврила йенне çавăнса хăйăр çине пиҫĕпе ÿкнĕ... Каврила Ҫĕлкаш çине пăхса хытсах кайнă. Акă Ҫĕлкаш урине çĕклерĕ, пуçне çĕклеме пуçларĕ те купăс хĕлĕхĕ пек тăсăлса выртрĕ. Вара Каврила хăранипе таçталла çеçенхир йеннелле, хура çумăр пĕлĕҫĕ йеннелле, тарҫĕ.

Тинĕс хумĕсем шавласа тăнă. Кăпăк пăшăрханă, шыв тумлисем таçта çитиҫҫенех çӳле сирпĕннĕ.

Çумăр çума пуçларĕ. Малтан пăртак кăна ӳккелерĕ, унтан пĕр ҫарăнмасăр шултăра çумăра йаҫĕ. Шултăра çумăр çӳлтен çĕре çитиҫҫенех çеçенхирпе тинĕсе ҫатăр пек карса илҫĕ

Каврила çумăр ăшĕнҫе çухалҫĕ... Нумайҫен тинĕс хĕрринҫе çумăр айĕнҫе выртакан вăрăм çынсăр пуçне никам та курăнмарĕ. Акă пăртак тăрсан çумăр ăшĕнҫен çĕнĕрен Каврила ҫупса тухрĕ; вăл вĕçенкайăк пек Ҫĕлкаш патне вĕçсе çитрĕ те, ун умне ӳксе, ăна çавăркалама пуçларĕ.

Унăн аллисем ашă йун çине пырса перĕннĕ.

Вăл хăранипе, урнă çын пек сиксе тăнă. Унтан:

— Тăван, тăрха, тăр! тенĕ Ҫĕлкаша.

Ҫĕлкаш тăнă та Каврилана тĕртсе йарса каланă:

— Кай... кунтан!..

— Тӑванӑм!.. Каҫар!.. Шуйтан мана... тенӗ Каврила Ӗӗлкаш аллине ӗуптуса.

— Кай, кай... тенӗ лешӗ.

— Каҫар ҫылӑха!.. Каҫар! Тӑванӑм!..

— Кай шуйтан патне! тесе кӑшкӑрса йанӑ та Ӗӗлкаш хӑйӑр ҫине ларнӑ. Пиӗӗ унӑн шапшурӑ, хӑрамалла пулнӑ.

— Мӗн сана... тата? Кай, кай, тенӗ вӑл. Унтан вӑл хуйхӑракан Каврилана урипе тапнӑ, анӗах вӑй ҫуккипе кайса ўкме пуҫланӑ; Каврила Ӗӗлкаша ыталаса илнӗ те ўкме паман.

Халӗ Ӗӗлкаш пиӗӗ Каврила куҫӗсем умӗнӗе тӑнӑ.

Иккӗш те вӗсем хӑрушӑ пулнӑ.

— Лаӗ!—Ӗӗлкаш Каврила куҫӗсем ҫине лаӗлаттарса сурса хунӑ.

Лешӗ сурӗӑкне кӗпе ҫаннисемпе шӑлнӑ та:

— Мĕн тăвас тетĕн, çавна ту... Пĕр сăмах та каламăп!.. Йăлăнатăп, каçар, Христус турăшăн...

— Аскăн!.. Асма та пĕлместĕн!.. Ђĕлкаш пĕр аллине пиншак айне ђикнĕ те кĕпине çурса кăларса, шăлĕсене суранĕ ыратнипе шатăртаттарса, пуçне кĕпепе çыхма пуçланă.

— Укçасене илтĕни? тенĕ Ђĕлкаш.

— Çук илмен епĕ вĕсене! Кирлĕ мар мана вĕсем!..

Ђĕлкаш аллине кăсйине ђикнĕ те укçисене туртса кăларнă, унтан пĕр хутне кайалла кăсйине хунă та ыттисене Каврилана ывăтса йанă.

— Ил те кай!

— Илместĕп, тăванăм... Пултараймастăп! Малтан каçар!

— Ил, тетĕп!.. Ђĕлкаш куç шуррисене кăтартса ахăрса йанă.

— Каçар!.. унтан илĕп, тенĕ те Каврила Ђĕлкаш умне ђĕркуçленсе ларнă.

— Ҫук, илетĕн, аскăн!—Ђĕлкаш Каврила ҫӳҫĕнђен тытнă та питне укҫасем патне тĕртнĕ.—Ил! ил! Ахалех ĕҫлемен вĕт. Ил, мĕн хăратăн! Ҫынна вĕлерейменнинђен ан вăтан! Ман пек ҫыншăн никам та йĕмĕ. Тавтапуҫ тейĕҫ, пĕлсессĕн.

Акă, ил! Никам та есĕ мĕн туни ҫинђен пĕлмĕ... Акă ил!..

Каврила Ђĕлкаш кулнине курнă та ăна ҫăмăлтарах пулнă. Вара вăл укҫине илнĕ.

— Тăванăм!.. Каҫар мана! Каҫармастăни? е? тесе йăлăннă Каврила.

Ăна хирĕҫ Ђĕлкаш:

—Мĕншĕн?.. Тăванăм!.. Ним те пулмарĕҫке! Пайан есĕ мана, ыран епĕ сана, тенĕ.

— Ех, тăван, тăван!.. Каврила пуҫне силленĕ.

Ђĕлкаш Киврила умĕнђе кулса тăнă; пуҫне ҫыхнă кĕпи йунпа хĕрелсе тĕрĕкĕн хĕрлĕ хескки пекех курăннă.

Çумăр витререн йухтарнă пек çунă. Тинĕс хумĕсем хăйăр çине çиленсе пыра-пыра çапăнна. Икĕ çын каласма ҫаранна.

— Ну, сывă пул! Çапла каласа Ҫĕлкаш хула йеннелле утрĕ. Унăн урисем ҫĕтренĕ, пуçĕ те тĕреклĕ тăман пек туйăнна, çапах та вăл хула йеннелле утнă.

— Каçар, тăванăм!—тесе ыйтнă йулашки хут Каврила.

— Ан калаç!—тенĕ Ҫĕлкаш; хăй пĕр ҫаранмасăр утнă. Вăл тайкаланнă, сулахай аллипе пуçне тытса пынă, сылтăммипе сарă мăйăхне пĕтĕрнĕ.

Каврила ун хыçĕнҫен вăл çумăр хыçне пытаниҫҫенех пăхса тăнă.

Çумăр хытăран хытă çунă. Çеçенхир çумăрпа хурçă тĕслех тĕттĕмленсе ларнă.

Унтан Каврила хăйĕн йĕпе картусне илнĕ те сăхсăхнă, аллинҫи укçисене уçса пăхнă та ирĕклĕ сывласа илсе, укçисене хĕвне пĕтĕрсе ҫикнĕ те сарлака тĕреклĕ утăмсемпе çеçен хирелле утнă.

Тинĕс улапă. Вăл пысăк хумсене хăйăр çине ыта-ыта персе вĕсене вĕтçеççĕ кăпăк тунă. Çумăр пĕр ђарăнмасăр шывпа çĕре каснă... çил ахăрнă...

Пур йенђе те улани, ахăрни, кĕрлени илтĕннĕ.

Çумăр çунипе пĕлĕт те, çĕр те курăнман.

Ђасах çумăрпа хумсем Ђĕлкаш выртнă çĕрти хĕрлĕ йĕре çуса тасатрĕç. Вĕсемех хăйăр çинђи ура йĕрсене те пусарса лартрĕç... Вара тинĕс хĕрринђе икĕ çын хушшинђе пулнă пĕђĕк ĕçрен ним те асăнмалли йулмарĕ.

**Республёкри Ђăваш Кĕнеки К[…]аракан Уйрăмăн Шупашкарта Ађапăђа Кĕнеки-сем ђăвашла тухрĕçĕ.**

1. Кайăкçă Йемел—М. Сибиряка.
2. Макар тĕлĕкĕ—Короленко.
3. Кăвак Мăй—М. Сибиряка.
   Шăпђăк йурри—Андерсена.
4. Пĕђĕк паттăрсем—М. П. Петрова.
   Çўревçĕ шапа—В. Гаршина
5. Çеçпĕл (3 пайлă халлап)
6. Хуйхă—А. Чехова.
   Нăрă Вађукĕ—его же
7. Тăвата кун...—В. Гаршина.
8. Пĕр мушик пĕђђен икĕ кĕнерала тăран тарса усрани çинђен—С. Щедрина
   Ăслă ырашпĕтри—его же.
9. Хăравçă Пађђа } А. Чехова
   Хула тулашĕнђе }
   Тĕттĕмлĕх пĕтерет }
10. Упа çинђен.
11. Шартлама Сивĕ—Короленко.
12. Выçлăх çулсем—Ђĕкеç Ç.

---

С требованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Госиздат.

---

Книжка набрана учениками школы Фабзавуча типографии Чувашгосиздата, под наблюдением метранпажа В. П. Кулькова